Республикан…
им. М. Горького

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Май 10
ВЫРСАРНИКУН
№ 92 (9001)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков тата Демократилле Германи Республикин премьер-министрĕ Отто Гротеволь пĕр-пĕрин патне янă çырусем (1 стр.).
СЕПГ Центральнăй Комитечĕ КПСС Центральнăй Комитетне янă çыру (1 стр.).
Г. Алексеев.—Çуракине хăвăрт тата пысăк пахалăхпа ирттерер (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНАÇĔ. А. Воронов.—Партипе совет активĕ çулпуçăн генилле произведенине вĕренет (2 стр.).
ФЕЛЬЕТОН: А. Калган.—Элекçĕ (2 стр.).
В. Долгов.—«Нарспи» драма пирки (2—3 стр.).
КÿРШĔ РЕСПУБЛИКĂСЕНЧЕ. С. Низамов.—Тутар республики паянхи кун (3 стр.).
Т. Васильев.—Ревизи комиссийĕсен ĕçĕнчи хăш-пĕр çитменлĕхсем пирки (3 стр.).
РЕДАКЦИЕ КИЛНĔ ÇЫРУ. В. Данилов.—Строительство ĕçĕсен хакне йÿнетмелле (3 стр.).
А. Александров.—Тĕнчери лару-тăру (4 стр.).
Берлинра пулнă савăнăçлă лару (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Англипе Египет хушшинчи калаçусем чарăнса ларнă (4 стр.).

Пысăк тухăçлă çĕрулмипе пахча çимĕç ÿстерер

Çуракине тухнăранпа вăхăт ытла та нумай иртрĕ. Анчах республикăри колхозсем çуртрисем акас ĕçе вăраха ячĕç. Ир акакан пĕрчĕллĕ культурăсене халĕ те акса пĕтермен. Машина-трактор станцисем хăйсен вăйлă техникипе тухăçлă ĕçлемеççĕ. Колхозсем те машинăсемпе, лашасемпе, ĕç вăйĕпе туллин усă курмаççĕ. Çаксене пула ĕнтĕ, çуртрисем акас ĕç вăраха тăсăлса кайрĕ.

Хамăрпа кÿршĕри республикăсемпе, сăмахран, Мордва АССР-ĕпе танлаштарсан, пирĕн республика чылай кайра пырать. Çакă вăл парти организацийĕсем социализмла ăмăртăва хутшăнса йышăннă обязательствăсене чыслăн пурнăçласси шĕн кĕрешме колхозниксен, механизаторсен тата ялхуçалăхĕнчи ытти мĕнпур работниксен пĕтĕм вăй-хăватне, хамăрăн шалти мĕнпур ресурссемпе резервсене кирлĕ таран мобилизацилеменнинчен килет.

Парти райкомĕсен, райсовет исполкомĕсен, ялхуçалăх министерствипе унăн вырăнти органĕсен çураки хăвăртлăхне паянхинчен ик-виçĕ хут ытларах ÿстерме тивĕçлĕ мерăсем йышăнас пулать. Çуртрисене акас ĕçе вăраха тăсни ытти культурăсене вăхăтра акса хăварма чăрмантарать.

Халĕ, акă, çĕрулмипе пахча çимĕçсене лартса хăвармалли чи лайăх вăхăт çитрĕ. Çак культурăсем халăх апат-çимĕçĕнче пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вĕсен тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе пирĕн колхозсем иртнĕ çулта паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Нумай колхозсем, малта пыракан агротехникăна пурнăçа кĕртсе, пысăк тухăçлă пахча çимĕç тата çĕрулми пухса кĕртрĕç.

Сăмахран, Улатăр районĕнчи «Правда» колхозăн кашни гектартан 300-шер центнер çĕрулми тухнă. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Коммунизм» колхозри Е. Марковпа И. Шильдяков юлташсем ертсе пыракан бригадăсем кашни гектартан 392—395-шер центнер кишĕр ÿстерсе илнĕ. Первомайски районĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозри П. Чекушкин юлташ ертсе пыракан пахча çимĕç звени гектар пуçне 674-шар центнер кишĕр пухса кĕртнĕ. Тухăçлă пахча çимĕçĕ ÿстерекен, çав çимĕçсенчен çулсеренех пысăк усă куракан колхозсене татах нумай илсе кăтартма пулать.

Çапла пулсан та, пахча çимĕçпе çĕрулми лартса тăвас ĕçе тивĕçлипе хакламан, государство кăтартса панă плансене тăтăшах пурнăçа кĕртсе пыман колхозсем республикăра нумай-ха. Хăшпĕр колхозсен руководителĕсем çĕрулмипе пахча çимĕçсем лартса тума государство паракан плансене сĕмсĕррĕн пăсаççĕ. Çавна пула иртнĕ çулта Куславкка, Комсомольски, Шăмăршă, Çĕмĕрле, Октябрьски, Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи колхозсем çĕрулми лартмалли плана тултармарĕç.

Республикăра ĕççынnисене çулталăк тăршшĕпех пахча çимĕçсем кирлĕ чухлĕ сутмалла тăвас задачăна татса паман. Хуласемпе промышленность вăйлă аталанса пыракан поселоксем çывăхĕнче пахча çимĕçĕсемпе çĕрулми лартса тăвасси япăх пулса пырать. Хуласемпе юнашар колхозсенче пахча çимĕç акса тăвас ĕçе аталантарасси, парниксемпе теплица хуçалăхĕсем туса йĕркелесси юлса пырать. Çак отраслĕсене вăйлатас ыйтăва райисполкомсемпе ялхуçалăх пайĕсем колхозсем умне тивĕçлипе лартмаççĕ. Çапла, иртнĕ çулта Улатăр, Ишлей, Сĕнтĕрвăрри, Сĕнтĕр, Çĕрпÿ, Шупашкар районĕсенчи колхозсем пахча çимĕç акса тăвас, çав çимĕçсене хуларн ĕççыннисене парса тăрас тĕлĕшпе питĕ начар ĕçлерĕç.

Партипе советсен вырăнти организацийĕсем тата ялхуçалăх органĕсем колхозсенче пахча çимĕç тата çĕрулми лартмалли плана тăтăшах пурнăçласа пымалла тăвассишĕн кирлĕ пек тăрăшмаççĕ, çав культурăсен тухăçлăхне ÿстерме тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

Колхозсенче пахча çимĕç лартса тăвас тĕлĕшпе Чăваш АССР Ялхуçалăх министерстви çителĕксĕр ĕçлет. Вăл çĕрулмипе пахча çимĕç тухăçлăхне ÿстерме пулăшакан çĕнĕ меслетсене колхозсене сарса пымасть.

Çĕрулмие тата пахча çимĕçсене тăваткал кĕтеслĕ лартмалли çĕнĕ меслете кăтартса парса, çĕршыври ялхуçалăх науки пысăк çитĕнÿ турĕ. Тăваткал кĕтеслĕ меслетпе усă курни çĕрулмипе пахча çимĕçсем лартса тăвас ĕçе пĕтĕмпех механизацилеме май парать. Тĕслĕхрен, çĕрулмине купалас ĕçе йăлтах машинăсемпе тума пулать.

Çĕнĕ меслетпе усă курса, республикăри хăшпĕр колхозсем иртнĕ çулта паха тĕслĕхсем кăтартса пачĕç. Шăхасан районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз çĕрулмине çĕнĕ меслетпе лартса, гектартан 314-шар центнер пухса кĕртнĕ. Çав вырăнтах касăллă лартнă çĕрулми гектартан 206-шар центнер тухнă. Çак районти «Гвардеец» колхозра тăваткал кĕтеслĕ майпа лартнă вырăнта çĕрулми гектар пуçне 251 центнер, касăллă лартни—121-шер центнер тухнă. Çапла, çĕнĕ меслетпе лартсан çĕрулми икĕ хут ытла тухни курăнать. Анчах та çак паха меслетпе пирĕн нумай колхозсем халĕ те усă курмаççĕ-ха. Çĕрулмипе пахча çимĕçсене çĕнĕ меслетпе лартмалла тăвассишĕн сÿрĕк кĕрешнине малашне ниепле те тÿсме çук. Малта пыракан агротехникăн çĕнĕ, прогрессивлă мелĕсене колхоз производствине хăвăртрах кĕртсе пымалла.

Партипе совет организацийĕсен, ялхуçалăх органĕсен специалисчĕсен кăçалхи çуракинче çĕрулмипе пахча çимĕç лартмалли плана кашни колхоз тăрăх тултармалла тăвассишĕн çине тăрса кĕрешмелле. Çакăнпа пĕрлех çак культурăсене агротехникăлла чи лайăх срoксенче лартса хăвармалла.

Пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-сенче ĕçлекенсем, ялхуçалăх специалисчĕсем, Мордва тата Мари республикисемпе социализмла ăмăртăва тухса, 1953 çулта кашни гектартан вăтам шутпа 150-шар центнер çĕрулми пухса кĕртме тата ытти культурăсем енĕпе те планра кăтартнинчен пысăкрах тухăçлăх илме обязательство йышăнчĕç. Хамăр обязательствăсене чыслăн пурнăçлама кирлине пирĕн яланах асра тытмалла. Парти райкомĕсемпе пуçламăш парторганизацисен ялхуçалăх ĕçченĕсен социализмла ăмăртăвне оперативла ертсе пымалла.

Пахча çимĕçсемпе çĕрулми лартмалли чи лайăх сроксем çитрĕç пулин те, хăшпĕр районсенче çак культурăсене акма хатĕрленсе çитмен. Шăмăршă, Елчĕк, Кувакино, Тăвай, Улатăр, Йĕпреç районĕсенче çĕрулми вăрлăхĕ çитмест. Сĕнтĕр, Ишлей, Çĕрпÿ, Шупашкар, Шăхасан, Çĕмĕрле районĕсенчи нумай колхозсем пахча çимĕç культурисен вăрлăхне çителĕклĕ хатĕрлесе хуман. Кăларса лартмалли пахча çимĕç культурисен калчине ÿстерес ĕç те нумай колхозсенче кая юлса пырать.

Çак çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтермелле. 1953 çулхи плана пĕтĕмĕшпех тултарма кашни колхозрах пахча çимĕçпе çĕрулми вăрлăхĕ çителĕклĕ хатĕрлемелле. Лартма юрăхсăр çĕрулмие лайăххипе улăштарас ĕçе йĕркелемелле.

Пирĕн республикăн кăçал пахча çимĕçпе çĕрулми тухăçлăхне ÿстерме лайăх майсем пур. Тăпрара нÿрĕ нумай. Совет правительстви колхозсене минераллă удобренисем иртнĕ çулхинчен чылай ытларах пачĕ. МТС-сене çĕрулмипе пахча çимĕç культурисем акнă ретсем хушшинче ĕçлеме пултаракан машинăсемпе тракторсем килнĕ. Вĕсемпе пуриншпе те туллин усă курмалла.

Çĕрулмипе пахча çимĕçсем нумай лартар, вĕсен тухăçлăхне вăйлăн ÿстерер.

СССР Министрĕсен Совечĕн Председательне Г. М. МАЛЕНКОВ юлташа

Мускав

Хисеплĕ Маленков юлташ!

Нимĕç халăхĕ гитлерла фашизм пусмăрĕнчен ирĕке тухнăранпа 8 çул тултарнă ятпа эпĕ Сире, хисеплĕ Председатель юлташ, Демократилле Германи Республикин Правительстви ячĕпе тата хамăн ятпа чĕререн саламласа тав тăватăп.

Нимĕç халăхĕ çак куна ĕмĕр манми Генералиссимус Сталин генилле ертсе пынипе нимĕç халăхне ирĕке кăларнă тата ун валли çутă малашлăх çулне уçса панă Совет геройĕсене чĕререн хисеплесе тав тунипе палăртать.

Демократилле Германи Республикинчи ĕççыннисем пысăк хавасланăхпа социализм тума тытăнчĕç. Çапла вĕсем аслă нимĕç Карл Маркс хушса хăварнисене пурнăçа кĕртме пуçлаççĕ. Çак ĕçре пире Совет Союзĕ нумай енĕпе паракан питĕ пысăк пулăшу Демократилле Германи Республикинчи ĕççыннисене тата пысăкрах çитĕнÿсем тума хавхалантарать.

Вĕсем, Маркс, Энгельс, Ленин, Сталин вĕрентĕвне чĕрере тытса, çак çулпа нихçанхи пăрăнмасăр малалла пыраççĕ, нимĕç халăхне Бонри çар договорĕсемпе чуралантарма тăнине хирĕç, Германипе мирлĕ договор тăвассишĕн, пĕрлĕхлĕ, демократилле, мире юратакан, никама пăхăнман Германишĕн Хĕвеланăç Германири патриотсемпе пĕрле кĕрешеççĕ.

Çак кĕрешÿре нимĕç халăхне Совет Союзĕ тăванла интернационализма палăртса пулăшать. Вăл яланах Германи ыйтăвне мирлĕ майпа татса парассишĕн тăрать. Нумаях пулмасть СССР Правительстви тĕнчери ыйтусене мирлĕ майпа татса пама пулать тесе тепĕр хут уççăн кăтартса пачĕ. Çапла вара вăл тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатас ĕçе, мир ĕçне пысăк вăй хучĕ.

Эпĕ Сире, хисеплĕ Маленков юлташ, çакăн çинчен шантарса калатăп: Совет Союзĕпе — мир ялавне çÿлте тытса пыракан çĕршывпа тата халăх демократи çĕршывĕсемпе тачă туслăха пĕрлешнĕ Демократилле Германи Республикинчи ĕççыннисем мире сыхласа хăварас ĕçе малашне те хăйсен пĕтĕм пултарулăхне парĕç тата хăйсен тăван çĕршывĕн пĕрлĕхĕшĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешĕç.

Демократилле Германи Республикин Правительстви ячĕпе —
ОТТО ГРОТЕВОЛЬ,
премьер-министр.

Берлин, 1953 çулхи майăн 7-мĕшĕ.

Демократилле Германи Республикин Премьер-Министрне О. ГРОТЕВОЛЬ юлташа

Берлин

Демократилле Германи Республикин Правительствине, çавăн пекех Сире хăвăра та, Премьер-Министр юлташ, Германи халăхне фашизм пусмăрĕнчен ирĕке кăларнăранпа саккăр çул çитнĕ май Эсир туслă çыру янăшăн тав тăватăп.

Германи халăхне хăйĕн нациллĕ пĕрлĕхĕшĕн, мире юратакан, демократилле, никама пăхăнмасăр пурăнакан Германишĕн, Германи халăхĕпе мире юратакан мĕнпур халăхсен тĕп интересĕсемпе килĕшсе тăракан мирлĕ договор хăвăртрах тăвассишĕн кĕрешес ĕçре ăнăçусем туса пыма ырă сунатăп.

Г. МАЛЕНКОВ.

СЕПГ Центральнăй Комитечĕ КПСС Центральнăй Комитетне янă çыру

Хаклă юлташсем!

1953 çулхи майăн 8-мĕшĕнче нимĕç халăхĕ хăйне Совет Çарĕ—никам çĕнтерейми мухтавлă çар фашизмăн тискер пусмăрĕнчен ирĕке кăларнине паллă тăвать.

Çавна май Германири Социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕ партин мĕнпур членĕсемпе нимĕç ĕççыннисен ячĕпе Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетне, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн членĕсене, мухтавлă Совет Çарне тата аслă совет халăхне пире ирĕке кăларса историллĕ ĕç тунăшăн, Демократилле Германи Республикинче социализм никĕсне хывас ĕçре ырă кăмăлпа пулăшнăшăн чунтан-чĕререн тав тăвать.

Мире юратакан нимĕçсем пурте çак кунсенче Совет Çарĕн паттăрĕсене—этемлĕхе фашизм тискерлĕхĕнчен çăлса хăварассишĕн хăйсен пурнăçне панă çынсене хисеплесе пуç таяççĕ.

Совет халăхĕ, Аслă Отечественнăй вăрçăра пĕтĕм тĕнче историйĕнче палăрса тăракан çĕнтерÿ туса, хăйĕн Тăван çĕршывĕ çинчи хăрушлăха сирсе пăрахрĕ тата этемлĕхе фашизм пусмăрĕн хăрушлăхĕнчен хăтарчĕ. Кунпа пĕрлех совет халăхĕ нимĕç халăхне мире юратакан демократилле Германи туса хумалли çĕнĕ çул çине тăма май туса пачĕ.

Демократилле Германи Республики пĕрлĕхлĕ демократилле Германи туса хумалли никĕс пулса тăчĕ, мире юратакан халăхсем пурте ăна тăванла хисеплеççĕ. Совет Союзĕ Германи ыйтăвне мирлĕ майпа татса парас, Германипе тĕрĕслĕхлĕ мирлĕ договор тăвас ĕçе пуçарса пырать, ку ĕçсене тума хатĕр тăрать, çавăншăн нимĕç халăхĕ Совет Союзне уйрăмах пысăк тав тăвать.

Демократилле Германи Республикинчи ĕççыннисем общество пурнăçĕнче пур енĕпе те социализмла Совет Союзĕпе унăн партийĕнчен, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕнчен пысăк пулăшу илчĕç. Çавна пула нимĕç рабочи класĕ кĕске вăхăтрах халăх промышленноçне аталантарма пултарчĕ. Хресченсем ялхуçалăхĕн производство кооперативĕсене тăваççĕ. Промышленноçăн нумай отраслĕсем продукци вăрçă умĕнхинчен ытларах туса кăлараççĕ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн пуян опычĕ тăрăх вĕренсе, Германири Социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕ аталанса марксистла-ленинла парти пулса пырать. Вилĕмсĕр Сталинăн вĕрентĕвĕ тата КПСС XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем Германири Социалистсен пĕрлĕхлĕ партине Демократилле Германи Республикинче социализм тумалли çул кăтартса тăраççĕ.

Бонра тата Парижра тунă çар договорĕсене пурнăçлассине чарса лартас тесе Германири Социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕ пĕтĕм вăйпа тăрăшать. Вăл, нимĕç халăхĕ кĕрешсе илнĕ демократилле йĕркесене сыхласа хăварас тесе, нимĕç патриочĕсен кĕрешÿри хатĕрлĕхĕпе пултарулăхне ÿстерĕ. Ирĕклĕ, никама пăхăнмасăр пурăнакан, мире юратакан, демократилле Германи туса хуриччен Германири Социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕ нимĕç халăхĕн пĕрлĕхĕшĕн кĕрешĕ. Германири Социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕпе мĕнпур нимĕç ĕççыннисем Совет Союзĕнчи Коммунистсен партине тата пĕтĕм совет халăхне саламлаççĕ, совет халăхĕн ырлăхĕшĕн тата мире юратакан пĕтĕм этемлĕх ырлăхĕшĕн тăрăшса коммунизм строительствинче çĕнĕ пысăк çитĕнÿсем туса пыма ырă сунаççĕ.

Сывă пултăр аслă совет халăхĕпе нимĕç халăхĕ хушшинчи никам пăсайми çирĕп туслăх!

Сывă пултăр пирĕн халăха ирĕке кăларнă çар — никам çĕнтерейми мухтавлă Совет Çарĕ!

Сывă пултăр Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ—пĕтĕм тĕнчери рабочисен революцилле движенийĕн авангарчĕ!

Сывă пултăр Марксăн, Энгельсăн, Ленинăн тата Сталинăн никам çĕнтерейми вĕрентĕвĕ!

Германири Социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕ —
ВАЛЬТЕР УЛЬБРИХТ,
генеральнăй секретарь.

Берлин, 1953 çулхи майăн 6-мĕшĕ.

ПАМИРТИ БОТАНИКА САДĔНЧЕ

ХОРОГ (Горно-Бадахшан автономиллĕ облаçĕ), майăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Çĕршыври чи çÿлĕ сăрт çине вырнаçнă сад чечеке ларнă. Ку вăл—Таджик ССР Наука академийĕн ботаника институчĕн Памирти ботаника сачĕ.

Ботаника садĕнче ĕçлекенсем халиччен Памирта нихçан ÿсмен улма-çырла йывăççисемпе ÿсентăрансене тĕрĕслесе пăхаççĕ. Вĕсен вăрлăхĕсене кунта çĕршыври тĕрлĕ ботаника сачĕсенчен, опытлă станцисенчен кÿрсе килнĕ. Памирта сивве тÿсекен çĕрулми, тĕрлĕ йывăçсем лартса ÿстерме тытăннă.

Вырăнта ÿсе çитĕнекен ÿсентăрансене ĕрчетмелле тăвас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерме тытăннă. Çурçĕр тата Вăтаçĕр Таджикистанран кÿрсе килнĕ, Памир тăрăхĕнче тупнă çамрăк йывăççене кăларса лартасси вĕçленсе пырать. Вĕсем хушшинче—Памирта çитĕнекен хурăн, пилеш, барбарис, груша, улмуççи тата ыттисем те. Ботаника садĕнче ĕçлекенсем колхозсене садçăхчисем çитĕнтерме пулăшаççĕ.

Çуракине хăвăрт тата пысăк пахалăхпа ирттерер!

ЕЛЧĔК, майăн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Районти колхозсенче çуртрисем акас ĕç куллен-кун вăйланса пырать. Майăн 7-мĕшĕ тĕлне 7 пин гектар çине çурхи тырăсем акнă. Вăл шутра 4 пин гектара яхăн çурхи тулă акса хăварнă. Çавăн пекех 4 пин гектар çинчи кĕрхи тырăсен калчисене удобренисем сапса панă. Плана тултарма районĕпе тата 500 гектар лаптăк çинче кĕрхи тырăсен калчисене апат памалла.

Ялхуçалăх ĕçченĕсем вăйлă тырпул никĕсне хывса хăварас ĕçре малта пыракан агротехника кăтартăвĕсемпе анлăн усă кураççĕ. Пур колхозсенче те çурхи тырăсене ретлĕ майпа, вăрлăхсене яровизацилесе тата кирлĕ имçамсемпе хутăштарса акаççĕ.

Районти колхозсем хушшинчи социализмла ăмăртура Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз малта пырать. Артель членĕсем çуртрисем акмалли плана майăн 7-мĕшĕ тĕлне 75 процент тултарчĕç. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем кĕрхи тырăсен калчисене апат памалли тата сÿрелемелли плана ытлашшипех пурнăçланă. Колхозра мĕнпур ĕçсене пысăк пахалăхпа тăваççĕ.

Ку колхозри пуçламăш парторганизацие активистсем, мĕнпур ĕçе тĕрĕслесе тăнипе пĕрлех, колхозниксен ăмăртăвне вăйлатса пыма тăрăшаççĕ. Правленипе парторганизацие комсомол организацийĕ те пулăшать. Коммунистсемпе комсомолецсене ĕçĕн чи ответлă участокĕсене вырнаçтарса тухнă. Тăватă коммунист сеяльщиксем пулса ĕçлеççĕ, 11 комсомолеца культиваци тума уйăрнă. Комсомолецсенчен 30 çынна яхăн сÿреленĕ çĕрте ĕçлет. Коммунистсемпе комсомолецсем тата ытти чылай активистсем производствăра ĕç тухăçлăхне куллен-кун ÿстерсе пыраççĕ, пысăк пахалăхпа ĕçлеççĕ.

Колхозри пуçламăш парторганизаци, правлени ĕçне активлă хутшăннипе пĕрлех, çураки вăхăтĕнче партилле-политикăлла ĕçе нихçанхинчен те ытларах вăйлатрĕ. Агитколлектив колхозниксем хушшинчи политикăлла-массăлла ĕçе çирĕп план тăрăх туса пырать. Политикăлла агитаци ĕçне тума 15 коммуниста тата 9 комсомолеца уйăрнă. 14 комсомолец хаçат-журнал вуласа параççĕ. Парторганизаципе агитколлектив нагляднăй агитаципе анлă усă кураççĕ. Бригадăсенче боевой листоксем кăларса тăма 11 комсомолеца уйăрнă.

Агитколлектив çурхи ĕçсем пуçлансанах хăйĕн ĕçне уй-хир бригадисене куçарчĕ. Агитаторсем колхозниксем хушшинче политикăлла темăсем тăрăх тăтăшах калаçусем ирттереççĕ, хаçат-журналсем вуласа параççĕ, колхоз ĕçченĕсене çĕршыври паллă стахановецсен паха опычĕпе паллаштараççĕ.

Колхоз Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхозпа социализмла ăмăртса ĕçлет. Агитаторсем колхозниксене çакăн çинчен тăтăшах астутарса тăраççĕ, «Гвардеец» колхозри ялхуçалăх ĕçченĕсен ÿсĕмĕсем çинчен тĕплĕн каласа параççĕ.

Колхозра Хисеп хăми тунă. Унта кашни кунхи ĕç итогĕсене çырса тăраççĕ, малта пыракан бригадăсене, уйрăм колхозниксен ячĕсене палăртаççĕ. Кунтах каярах юлакан бригадăсем мĕнле ĕçлени те курăнса тăрать. Стена хаçачĕсемпе боевой листоксем тăтăшах кăларса тăни, вĕсен идейăлла содержанине вăйлатни ĕç тухăçлăхĕпе пахалăхне ÿстерме нумай пулăшать. Уй-хир ĕçĕсем пуçланнăранпа бригадăсенче 43 номер боевой листоксем кăларнă.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз ĕççченĕсен лайăх примерĕ ытти колхозсене те сарăлса пырать. Ленин ячĕпе тăракан, «Марс», Мичурин ячĕпе, Максим Горький ячĕпе тăракан, «Пахарь», «Вперед» тата ытти хăшпĕр колхозсенче те çураки ĕçĕсем йĕркеллĕ пулса пыраççĕ. Ку артельсен членĕсем çурхи тырăсене кĕске срокра тата лайăх пахалăхпа акса хăварассишĕн вăйлăн кĕрешеççĕ. Пуçламăш парторганизацисем хăйсен организаторла ролĕне вăйлатса пыни ку колхозсенче аван палăрать.

Анчах пур колхозсенче те ĕç кал-кал пулса пырать теме çук-ха. Уйрăм колхозсенче çураки ĕçĕ вăраха тăсăлса пырать. Нумаях пулмасть КПСС райкомĕ, колхозсенче çураки ĕçĕсем мĕнле пулса пыни çинчен сÿтсе явса, ĕçри пысăк çитменлĕхсене палăртрĕ. Хăшпĕр колхозсенче сдельщинăпа ĕçлессине халĕ те йĕркелесе çитермен. Лашапа ĕçлемелли сеялкăсемпе туллин усă курманни çинчен калакан тĕслĕхсем те пур.

Чкалов ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ Иванов юлташ) колхозниксем пĕрле пухăнса, сдельщина йĕркине пăхăнмасăр, ĕçлеççĕ. Туртăм вăйĕпе тĕрĕс усă курмаççĕ. Ĕç лашисене начар пăхаççĕ. Колхозри пуçламăш парторганизаци йĕркесĕрлĕхсене хирĕç кĕрешмест, çитменлĕхсемпе килĕшсе тăрать. Парти райкомĕ ку колхозри пуçламăш парторганизацие партилле-политикăлла ĕçе вăйлатма пулăшас тесе çын уйăрса ячĕ. Парторганизаци коммунистсен усă пухăвне ирттерчĕ, ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнчĕ. КПСС райкомĕн представителĕ парторганизацие колхозниксем хушшинчи политикăлла-массăлла ĕçе лайăхлатма пулăшрĕ.

Елчĕкри машина-трактор станци—республикăри чи пысăк МТС-сенчен пĕри. Анчах та пирĕн МТС паянхи куна колхозсене çителĕклĕ пулăшаймасть-ха. МТС-ри уйрăм механизаторсем пысăк ÿсĕмсем тăваççĕ. Сăмахран, 9-мĕш бригадăри трактористсем Андреевпа Соловьев юлташсем сменăри нормăна кулленех 110—120-шер процент тултарса ĕçлеççĕ. Çав вăхăтрах нумай трактористсен ĕç тухăçлăхĕ ытла та пĕчĕк. МТС дирекцийĕ лайăх ĕçлекен механизаторсен опытне коллектив хушшинче сарма тăрăшмасть. МТС-ăн кăçал колхозсене 15 пин гектар тырă акса памалла, анчах майăн 7-мĕшне 4 пин гектара яхăн кăна акнă.

Указов юлташ ертсе пыракан 15-мĕш трактор бригади М. Горький тата «Марс» колхозсенче ĕçлет. Бригадăра ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен. Ку бригадăн план тăрăх колхозсене 700 гектар çурхи тырăсем акса памалла пулсан, 70 гектар кăна акнă. Культиваци тăвас ĕç те чăтма çук япăх пырать. Бригадăри тракторсене пĕчĕк кăлтăксем пулнипех темиçешер кун хушши ĕçлеттермесĕр лартаççĕ. Кун пек тĕслĕхсем ытти чылай бригадăсенче те пур.

Парти райкомĕ районти колхозсенче çураки ĕçĕсене хăвăртлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнчĕ. Пуçламăш парторганизацисене партилле-политикăлла ĕçе вăйлатма парти ĕçĕнчи ответлă работниксем колхозсене кайрĕç.

КПСС райкомĕпе райсовет исполкомĕ майăн 13-мĕшĕнче Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра районти колхоз председателĕсен семинарне ирттерме палăртрĕç. Колхоз председателĕсем Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн паха опычĕпе анлăн паллашаççĕ. Семинарта колхоз агрономĕ Васильева юлташ выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçе лайăхлатмалли майсем çинчен доклад туса парать.

Г. АЛЕКСЕЕВ,
КПСС Елчĕк райкомĕн секретарĕ.

Тĕштырăсем акса пĕтернĕ

ЧКАЛОВСКИ. Районти колхозсенче çуракине кĕске срокра тата агротехникăна тĕплĕн пурнăçласа ирттерессишĕн социализмла ăмăрту анлăн сарăлчĕ. Çуракинче Ленин ячĕпе, Чкалов ячĕпе, Молотов ячĕпе тăракан, «Красное знамя» колхозсем малта пыраççĕ.

Молотов ячĕпе тăракан, Чкалов ячĕпе тăракан колхозсем ир акакан культурăсене майăн 5-мĕшĕнче акса пĕтернĕ.

Ленин ячĕпе тăракан колхоз майăн 6-мĕшĕ тĕлне 350 гектар çине çурхи тырăсем акнă, ир акакан культурăсем акмалли плана ирттерсе тултарнă. План тăрăх çурхи тулă 175 гектар акмалла пулнă шутсан, 195 гектар акнă. Выльăх апачĕ тумалли культурăсем акмалли плана та тултарнă.

Генилле произведение вĕренеççĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Березовкăри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительсем хăйсен политикăлла пĕлĕвне харпăр хăй тĕллĕн вĕренсе ÿстереççĕ. Вĕсем халĕ И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле произведенине вĕренсе пĕтереççĕ. Çак произведенин кашни пайĕ тăрăх конспектсем çырса пыраççĕ. Учительсем И. Эрлов консультант ирттерекен калаçусене активлăн хутшăнаççĕ.

А. Железнов, А. Пудейкин тата А. Ефремов учительсем Ленин ячĕпе тăракан колхозри парторганизацинче кружоксене ертсе пыраççĕ. Вĕсем колхозри коммунистсемпе партийĕ тăман активпа марксизм-ленинизм теорийĕпе хĕçпăшалланма пулăшаççĕ.

Аслă çулпуçăн произведенийĕ тăрăх колхозниксем хушшинче час-часах лекцисем вулаççĕ.

Симĕç конвейер

СОВЕТСКИ. Юлашки çулсенче Киров ячĕпе тăракан колхоз обществăлла выльăх-чĕрлĕхне кайăк-кĕшĕк йышне чылай ÿстерчĕ. Анчах та халлĕхе колхоз фермисенче выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ. Сăмахран, иртнĕ çул кашни ĕнерен 415-шер литр кăна сĕт суса илнĕ. Çавнашкалах сысна, сурăх, кайăк-кĕшĕк фермисенчен те продукци планпа пăхнинчен сахалтарах илнĕ.

Çак çитменлĕхе пĕтерес тесе, колхозниксем выльăх апачĕн çирĕп никĕсĕшĕн çине тăрсах кĕрешме тытăннă. Колхозăн выльăх апачĕ хатĕрлемелли план пур. План тăрăх кăçал обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли тĕштырă, утă, арпа-улăм кăна мар, сĕтеклĕ апатсем те ытлăн-çитлĕн хатĕрлеме палăртнă. 9 гектар çине выльăх кăшманĕ акаççĕ. Фермăсем валли çĕрулми çителĕклĕ пулать. Вăл 74 гектар йышăнать. Силос—паха апат. Ăна кăçал пурĕ 400 тонна, пĕлтĕрхинчен икĕ хут ытларах хывма йышăннă.

Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне çуллахи вăхăтра ÿстерсе пыма канçĕрлекен çĕп чăрмав симĕс апат çителĕксĕрри пулнă. Çак ыйтăва колхозниксем ятарласа сÿтсе явнă. Вĕсем пĕр вывод тунă: «Пирĕн симĕс конвейер тумаллах», тенĕ.

Халĕ ĕнтĕ кировецсем хăйсен сăмахне практикăлла ĕçсемпе çирĕплетеççĕ. Вĕсем кĕтÿ çÿретмелли вырăнсенче курăк тухăçлăхне ÿстерме агротехникăлла ĕçсем туса ирттереççĕ. Кунсăр пуçне, симĕс конвейер организацилеме кăçалтан пуçласа тĕрлĕ срокра пулса ĕлкĕрекен культурăсем акса тума тытăнаççĕ.

— Сăвакан ĕнесене симĕс апат çулса парассине йĕркелесси — пирĕн чи çывăх ĕç. Ăна — пурнăçлатпăрах, — тет колхоз председателĕ С. Ярдыков юлташ.

Кăçалах çапла пулать те ĕнтĕ. Иртнĕ кĕркунне ятарласа акнă ыраш — чи ир пулса ĕлкĕрекен симĕс апат. Вăл çичĕ гектар йышăнать. Ăна кĕтÿ çÿретмелли вырăнта курăксем шăтса ÿсиччен çулма тытăнаççĕ, ĕнесене кормушкăсем çине хурса парса çитереççĕ. Кĕрхи ыраш хыççăн нумай çул ÿсекен курăксем çулса пама тытăнаççĕ. 12 гектар çинчи клевер выльăхсене чылай вăхăт хушши çулса тăрантарма çитет. Унтан викăпа сĕлĕ хутăшĕ ĕлкĕрет. Ăна 13 гектар çине акаççĕ.

Каярахпа ĕнесене иккĕмĕш хут çулса илнĕ клевер, кăшман тата ир хывнă силос çитермелле тăваççĕ. Çапла вара çуркуннерен пуçласа хура кĕркуннеччченех ĕнесене тутти-сыппиcĕр симĕс апатпа тăрантармалла пулать.

Колхоз уй-хирĕсенче халĕ хĕрÿ ĕç пĕр самантлăха та лăпланмасть. Бригадăсем çурхи ĕçсене хăвăртрах вĕçлессишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

М. ОСИПОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Партипе совет активĕ çулпуçăн генилле произведенине вĕренет

Пирĕн хуçалăхпа культура строительствинче ĕçсен ăнăçлăхĕ ертсе пыракан кадрсен ăсталăхĕпе пĕлĕвĕнчен нумай килет. Вĕсем ĕçе пĕлсе, малашлăха курса ĕçлени кирлĕ. И. В. Сталин 1931 çулта, хозяйственниксен задачисем çинчен каласа, çапла кăтартса панă: «Тĕмĕн чухлĕ резолюцисем çырăр, кирек мĕнле сăмахсемпе тупа тăвăр, анчах заводсен, фабрикăсен, шахтăсен техникине, экономикине, финансне вĕренсе алла илмесен,— ӳсси пулмасть, единоначали пулмасть».

Кадрсен ертсе пырас ăсталăхне, вĕсен экономикăлла тата политикăлла пĕлĕвĕсене ӳстерес ĕçре И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенийĕ калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Шупашкар районĕнчи ĕçсыннисем, мĕнпур совет çыннисем пекех, И. В. Сталинăн çак çĕнĕ ĕçне питĕ пысăк кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Партипе совет активĕ, районти интеллигенци, рабочисемпе колхозниксем аслă çулпуçăн çак генилле ĕçне çине тăрса вĕренеççĕ. Унăн вĕрентĕвне ĕçсыннисем хушшинче пропагандăлас ĕç вăйланса пырать.

Кадрсемпе районти ĕçсыннисене «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисене» вĕренме пулăшас тĕлĕшпе парти райкомĕ чылай ĕçсем туса иртерчĕ. Пуçламăш парторганизацисен ыйтăвĕсене шута илсе, вĕсен çумĕнче И. В. Сталинăн произведенине вĕренме кружоксем уçрăмăр. КПСС райкомĕ тăтăшах лекцисем иртерет. Ку ĕçе эпир январьтен вара туса пынă. Нумаях пулмасть çак генилле ĕç тăрăх юлашки лекци иртертĕмĕр. «И. В. Сталин империализм лагерĕнче хирĕçӳсем вăйланса пыни тата капитализмла çĕршывсем хушшинче вăрçăсем пурпĕрех пуласси çинчен» тема тăрăх лекцие Варламов юлташ вуласа пачĕ.

Лекцисем иртерме парти райкомне КПСС обкомĕпе политикăлла тата наукăлла пĕлӳсем саракан Пĕтĕм Союзри обществăн республикăри уйрăмĕ пысăк пулăшу пачĕç. «И. В. Сталин экономика аталанăвĕн законĕсен объективлă характерĕ çинчен» К. Евлампьев юлташ вуланă лекци, «Тĕнчери пĕрлĕхлĕ рынок пайланса кайни тата тĕнчери капитализм системин кризисĕ тарăнланса пыни çинчен» экономика наукисен кандидачĕ Лебедев юлташ вуланă лекци, «Производствăлла хутшăнусем производительнăй вăйсен характерĕпе обязательно килĕшсе тăмалли закон», «И. В. Сталин хальхи вăхăтри капитализмăн экономикăлла тĕп законне уçса пани тата ăна никĕслени» темăсем тăрăх вуланă лекцисем идея тĕлĕшĕнчен уйрăмах çӳлĕ пусăмра иртрĕç. «И. В. Сталин «СССР халăх хуçалăхĕ план (пропорци) тăрăх аталанса пыни çинчен» тата «Хулапа ял хушшинчи хире-хирĕçлĕхе пĕтересси тата вĕсем хушшинчи уйрăмлăхсене пĕтермелли майсем» темăсем тăрăх лектор Калашников юлташ вуланă лекцисем те итлекенсене интереслентерчĕç.

Лекцисене итлекенсем йышлăн пулчĕç. И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă ĕçĕ тăрăх иртернĕ 12 лекцие пин çын ытла итлерĕ.

Çулпуçăн генилле ĕçĕ çинчен лекцисен циклне итлени марксизм-ленинизм теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕренекен кадрсене пысăк пулăшу пачĕ, парти райкомĕн штатра тăман лекторĕсемпе политикăлла тата наукăлла пĕлӳсем саракан Пĕтĕм Союзри обществăн районти уйрăмĕн ĕçĕсене лайăхлатма пулăшрĕ. Районти ĕçсыннисем хушшинче лекцилле пропаганда юлашки вăхăтра чылай лайăхланнине те çакăнпа ăнлантарса пама пулать.

Эпир халĕ ĕçе çакăн пек йĕркелесе пыратпăр. Политикăлла тата наукăлла пĕлӳсем саракан Пĕтĕм Союзри обществăн членĕсем тата КПСС райкомĕн штатра тăман лекторĕсем районти коммунистсемпе ĕçсыннисем хушшинче вулама лекцисем хатĕрлеççĕ. Уйрăм юлташсем çырса хатĕрленĕ лекцисене общество членĕсен районти пĕрлехи пухăвĕнче е лекторсен ушкăнĕн ларăвĕнче пăхса тухаççĕ. Çав лекцисене вара ĕçсыннисене вуласа параççĕ.

Парти райкомĕн штатра тăман кашни лекторне, Политикăлла тата наукăлла пĕлӳсем саракан Пĕтĕм Союзри обществăн районти хăшпĕр членĕсене уйрăмшар заданисем панă. Кăтартса панă темăсем тăрăх вĕсем малтан текстсем çырса хатĕрлеççĕ. Халĕ Н. Антонов юлташ «И. В. Сталин социализмăн экономикăлла тĕп законне уçса тата никĕслесе пани» тема тăрăх, А. Свинцов юлташ «И. В. Сталин СССР халăх хуçалăхĕ план (пропорци) тăрăх аталанса пыни çинчен», Н. Ильина юлташ «И. В. Сталин социализм вăхăтĕнчи таварлă производствăпа хаклăх законĕ çинчен» лекцисен текстчĕсене çырса хатĕрлеççĕ.

Политикăлла тата наукăлла пĕлӳсем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен общество членĕсем те лекцисем хатĕрлес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеççĕ. Уйрăмах А. Васильев, Ф. Марков юлташсем пултаруллă ĕçленине палăртмалла. Вĕсем «Хулапа ял хушшинчи хире-хирĕçлĕхе тата вĕсем хушшинчи уйрăмлăхсене пĕтересси çинчен», «Ăс-тăн ĕçлевĕпе вăй-хал ĕçлевĕ хушшинчи хире-хирĕçлĕхе тата вĕсем хушшинчи уйрăмлăхсене пĕтересси çинчен» темăсем тăрăх лекцисем хатĕрлеççĕ.

КПСС райкомĕн штатра тăман лекторĕсемпе Политикăлла тата наукăлла пĕлӳсем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен Пĕтĕм Союзри общество членĕсем — М. Зайцев, Г. Афанасьев, Ф. Марков тата ытти хăшпĕр юлташсем хăйсем çырнă лекцисене И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă ĕçне вĕренекенсене виç-тăватшар хут вуласа пачĕç.

Аслă çулпуçăн генилле ĕçне тĕплĕрехх вĕренес тесе эпир партипе совет активĕ валли ятарласа семинар уçрăмăр. Унта вĕренме 27 çын çӳрет. Вĕсем — партипе совет тата комсомол ĕçĕнчи ертсе пыракан работниксем. Вĕренекенсем пурте конспектсем çырса, занятисене лайăх хатĕрленсе пыраççĕ. Семинара КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ М. Зайцев юлташ ертсе пырать. Занятисене парти райкомĕн штатра тăман лекторĕсем, политика тĕлĕшĕнчен пысăкрах пĕлӳ илнĕ юлташсем иртереççĕ.

Калас пулать, семинар пирĕн кадрсен политикăлла пĕлĕвне ӳстерме пысăк пулăшу парать. Занятисем активлă, идея тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра иртеççĕ.

«ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведение вĕренессине районти учительсем хушшинче те йĕркелерĕмĕр. Парти райкомĕ историпе СССР Конституцине вĕрентекен учительсем валли те семинар организацилерĕ. Семинарсене КПСС райкомĕн штатра тăман лекторĕсем иртереççĕ.

Кунсăр пусне, И. В. Сталин юлташ ĕçне вĕренмелли кружоксем шкулсенчи парторганизацисем çумĕнче те йĕркеленĕ. Иккассипе Лапсарти çичĕ çул вĕренмелли шкулсенче, Кӳкеçри вăтам шкулта кружоксен занятийĕсем активлă иртнине палăртмалла. Иккасси шкулĕнчи учительсем 12 тема вĕренсе пĕтерчĕç. Заводскойри çичĕ çул вĕренмелли шкулти кружокра халĕ тăххăрмĕш темăна вĕренеççĕ. Кружоксен руководителĕсем КПСС райкомĕ çумĕнчи семинарсене çӳреççĕ.

И. В. Сталинăн ĕçне вĕренекенсене пулăшма парти райкомĕн библиотекинче справкăсем паракан сĕтел, кĕнекесен витрини тунă, уйрăм темăсем тăрăх папкăсем йĕркеленĕ. Библиотекăра консультантсем е штатра тăман лекторсем ялан пулаççĕ. Вĕсем вĕренекенсене консультацисем параççĕ, материалсене ăнланма пулăшаççĕ.

Эпир кадрсен экономикăлла пĕлĕвĕпе политикăлла тавракурăмне ӳстерес, вĕсене И. В. Сталин юлташ çырнă «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле ĕçĕпе хĕçпăшаллантарас тĕлĕшпе малтанхи хăшпĕр ĕçсене çеç тунă-ха. Пирĕн ĕçре çитменлĕхсем те сахал мар-ха. КПСС райкомĕ кадрсен вĕренĕвне лайăхлатас, ĕçсыннисене политикăлла воспитани парас ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнать.

А. ВОРОНОВ,
КПСС Шупашкар райкомĕн секретарĕ, лекторсен ушкăнĕн руководителĕ.

Кирпĕч тăвакансен ăмăртăвĕ

Шупашкарти «Победа» промартель членĕсем çак кунсенче пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. Халăх хуçалăхне строительство материалĕсем нумай кирлине шута илсе, вĕсем кирпĕч туса кăлармалли плана срокчен тултарма, ĕçсыннисем валли планран иртерсе 200 пин кирпĕч туса кăларма, ĕç тухăçлăхне ӳстерме, продукци пахалăхне лайăхлатма, кирпĕч типĕтес ĕçе, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, икĕ хут хăвăртлатма пулса социализмла обязательствăсем йышăнчĕç. Кунпа пĕрлех артель членĕсем Сĕнтĕрвăрринчи «Стройматериал» промартелне социализмла ăмăртăва чĕнчĕç.

Çак кунсенче артель чĕрĕ кирпĕч тума тытăнчĕ, 200 пин чĕрĕ кирпĕч туса кăларнă та ĕнтĕ. Ĕçлекенсем чылайăшĕ ĕç нормине ăнăçлă тултарса пыраççĕ, паха продукци туса кăлараççĕ.

Шупашкар хулинчи промкомбинатра кирпĕч производствине механизацилес тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса иртернĕ, Сталинла премии лауреачĕсен Карташцевпа Дуванов юлташсен опычĕпе анлăн усă курма тытăннă. Г. Нуртдинов юлташ хĕртнĕ кирпĕче кăмакаран кăлармалли хатĕрсем тăвать. Малтан шутласа пăхнă тăрăх, унăн сĕнĕвне пурнăça кĕртни ĕç тухăçлăхне тăват-пилĕк хут ӳстерме май парать.

Комбинат иртнĕ уйăхра кирпĕч тумалли плана ăнăçлă тултарчĕ. Кунти коллектив кăçал планран иртерсе 300 пин чĕрĕ кирпĕч, 200 пин хĕртнĕ кирпĕч туса кăларассишĕн, продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн, топливо перекетлессишĕн кĕрешет. Иртнĕ сезонта куллен 4—5 пин чĕрĕ кирпĕч туса кăларнă пулсан, халĕ 13—14-шар пин туса кăлараççĕ. Егоров юлташ ертсе пыракан бригада задание куллен ăнăçлă тултарса пырать. Кирпĕч касакан Васильева юлташ нормăна 150 процент таран тултарать. Чернова, Никитина юлташсем тата ыттисем те ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Е. НИКИТИН.

Куллен кирлĕ таварсем туса кăлараççĕ

Чăвашкоопинсоюза пăхăнса тăракан чылай артельсем производство планне уйăхран уйăха ăнăçлă тултарса пыраççĕ, продукци пахалăхне лайăхлатаççĕ, çĕнĕ йышши япаласем туса кăларма тăрăшаççĕ.

Уйрăмах Вăрнарти «Трудовик» артель членĕсен ĕçри хастарлăхне палăртас пулать. Кăçалхи пĕрремĕш кварталта артель планран иртерсе халăха куллен кирлĕ таварсем 85 пин тенкĕлĕх туса кăларчĕ, производствăпа финанс планĕн ытти кăтартăвĕсене те ăнăçлă пурнăçларĕ. Çавăншăн артель Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Артель иртнĕ уйăхри плана апрелĕн 23-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ, планран иртерсе чылай продукци туса кăларчĕ. Артель членĕсем иккĕмĕш кварталти плана срокчен тата иртерсе тултарассишĕн, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне хăйсен аллинчех хăварассишĕн кĕрешеççĕ.

Шупашкарти «Чебторгин» артель тăватă уйăхри планран иртерсе продукци нумай туса кăларчĕ. Артель членĕсем нумайăшĕ ĕç нормине тăтăшах иртерсе тултараççĕ, паха продукци туса кăлараççĕ. А. Беззубов, М. Сидорова юлташсем ĕç нормине 160—170 процент таран тултарса пыраççĕ.

Чăвашкоопинсоюза пăхăнса тăракан артельсем 1953 çулхи плана срокчен тултарассишĕн, планран иртерсе çур миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларассишĕн кĕрешеççĕ.

Л. ЕФИМОВ,
Чăвашкоопинсоюз президиумĕн председатель заместителĕ.

ФЕЛЬЕТОН

Элекçĕ

— Элекçĕ ятне илтиччен, кĕлмĕç ятне илт,—тенĕ авал ваттисем. Халăх хушшинче халĕ те çапла каланине илтме пулать:

— Кăвакал шыва пăтратать, хăех «шыв пăтранчăк» тесе нартлатать.

Эпир сире çавăн пек пĕр «кăвакалпа» паллаштарасшăн. Ăна малтан Григорий Иванович тесе чĕнетчĕç. Халĕ—элекçĕ Соловьев, теççĕ.

Вăл — Муркаш районĕнчи Чаканар ялĕнче çуралса ӳснĕ. Ача чухне ялти пуçламăш шкулта, каярахпа совпартшкулта вĕренкеленĕ. Комсомола, унтан парти ретне те ăнсăртран кĕнĕ. Вăрçăччен тата вăрçă хыççăн вăл темиçе çул хушши районти тĕрлĕ учрежденисенче ĕçлесе пурăннă. Анчах та Григорий Иванович нихăçан та пĕтĕм вăйне хурса ĕçлеме юратман. Хăйĕн пĕлĕвне, тавракурăмне ӳстерессипе те йăлара пулман унăн. Çапла вăл, вырăнтан-вырăна куçса çӳресех, пурнăçран тăрса юлнă. «Яла, хамăр колхоза кайса пурăнас, унта куç курĕ» — шухăшланă вăл хăйне йăпатса, ăна районти перекет кассинче ĕçленĕ çĕртен кăларса янă хыççăн. Вара 1948 çулта Чаканара таврăннă та икĕ çула яхăн «Хĕрлĕ Октябрь» колхозра рядовой колхозник пулса пурăннă. Пухусемпе ларусенче Григорий Иванович час-часах правлени ĕçне тиркенĕ, колхоза тĕреклетесси çинчен каласма юратнă. Çапла вăл колхоз председательне лекме пултарнă.

Анчах... «Шăпчăкăн юрри çеç хитре» теççĕ. Соловьевăн та сăмахĕсем çеç хитре пулнă. Вăл председательте ĕçлеме тытăннă хыççăн колхоз хуçалăхĕ, кунсерен тĕреклене пырас вырăнне, пушшех начарланма пуçланă. Ĕç дисциплини япăхса кайнă. Тырпулсене вăхăтра пухса кĕртеймен. Пĕр гектар ытларах вика çапламасах хирте çĕрсе пĕтнĕ. Çителĕклĕ таран апат хатĕрлемен пирки, фермăри выльăхсем çур хĕлтех çав тери начарланса çитнĕ.

— Йăнăшрăмăр, — тенĕ колхозниксем. Вара 1952 çулхи февральте, отчетпа суйлав пухăвĕнче, Соловьев темĕнле хитре каласнă пулсан та, вĕсем ăна текех ĕненмен, унăн çитменлĕхĕсене пĕтĕмпех уçса кăтартнă.

— Çитет! Пире пуш парапан çапакансем кирлĕ мар! Алексей Федорович Федорова районтан чĕнсе илес. Вăл пирĕн колхоза вăрçă вăхăтĕнче те начар мар ертсе пычĕ,—тенĕ колхозниксем пĕр кăмăллă пулса.

Çав кас Соловьев çĕрĕпех çывăрайман. «Ăçтан аса илчĕç-ха ку Федорова? Вăл пулман пулсан, каллех мана суйланă пулĕччĕç, колхозра ман майлисем те çук мар»—шухăшланă вăл, хăйĕнпе пĕрле артель Уставне пăсакансене аса илсе.—«Хă, тупнă председатель! Кам-ха вăл Федоров? Эпĕ ăна партине кĕме те хам рекомендаци панă. Кăна пĕлнĕ пулсан...»

Вара вăл, сарă хутлă тетрадьрен темиçе листа татса илет те, сĕтел хушшине ларса, республикăри хаçат редакцине çыру çырма тытăнать.

— «Сурăх тирĕпе витĕнĕ кашкăр»,— çырса хурать вăл чи малтанах, хăйĕн тăшманне «аркатма» тытăнса. Унтан вăл, ним намăса пĕлмесĕр, хăйĕн таса мар пӳрнинчен «фактсем» ĕмсе кăларма пуçлать.

«Граждан вăрçи вăхăтĕнче Федоров хурал ротисен çыруçи пулнă. Тавай-ха эп ăна дезертир туса хурам»—тет те вăл çав элеке хут çине çырса хурать. «Федоровăн аппăшĕ Мясников хушаматпа çӳренĕ. Тавай-ха эп: Федоров 1921—23 çулсенче Шурча волисполкомĕнче ĕçленĕ чух хăйĕн хушаматне, çынсем вăл дезертир пулнине пĕлесрен хăраса, юри улăштарнă, тесе çырам... 1923—26 çулсенче Федоров потребительсен обществин правлени членĕ пулса ĕçленĕ. Тавай-ха эп: Федоров НЭП вăхăтĕнче лавкка тытнă, арăмĕн ячĕпе патент илсе сутту туса пурăннă, ăна уншăн раскулачить тумалла пулнă, тесе çырса хурам».

Каланă — тунă. Анчах Соловьев кунпа кăна та çырлахмасть-ха. Вăл Федоров юлташăн паянхи сăн-сăпатне те, хăйне кирлĕ пек улăштарса, хăрăмпа сăрласа кăтартать.

«А. Ф. Федоров «Хĕрлĕ Октябрь» колхоз председателĕ, анчах та вăл колхозшăн мар, хăйĕн хуçалăхĕшĕн çеç тăрăшать», имĕш. Çакна Соловьев каллех «фактсемпе çирĕплетсе парать». Хăй председатель пулнă чухне хиртех çĕртсе янă викăна аса илет те, ăна та Федоров çине йăвантарать. Федорова райплан вăрманта хăйне валли пĕр тонна утă хатĕрлеме ирĕк панă. Соловьев çакна пуçхĕрлĕ çавăрса хурать те, «Федоров колхоз утине çĕрле хăйĕн килне турттарнă», тесе çырать. Соловьев председательте чухне япăхтарса янă колхоз ферминчи выльăхсене Федоров юлташ çăва тухиччен хăйĕн ĕç укçипе илнĕ апатпа тăрантарса пурăнни çинчен элекçĕ аса та илмест. Ку кăна сахал-ха. «Федоров хăйĕн сыснисене колхоз тырри çине кăлара-кăлара ярать», тесе элеклет вăл. А. Скворцова колхозница йăнăшпе пулă «Улитка» ятлă кĕсре хăм пăрахса вилнĕшĕн те, А. Петровпа В. Никитин колхоз тыррине вăрланăшăн та Федоров юлташ айăплă иккен (çав вăрăсене Федоров юлташ ытти колхозниксемпе пĕрле хăй тытнă тата кирлĕ пек ответ тыттарнă пулнă).

Элек кулине Соловьев çапла вĕçлет:

— «Эпир нумайăн пухăнса çыратпăр, пире важно — редакци Федоров камне пĕлмен çынсене пĕлтерме пулăшсан аванччĕ, разоблачить бы!».

Элекçĕсем çав тери хăравçă иккенне пурте пĕлеççĕ. Соловьев та çыру вĕçне хăйĕн ятне лартма хăрать, ун вырăнне 8 колхозник хушаматне, вĕсем хăйсем алă пуснă пек туса, çырса хурать.

Суя çăмхи редакцине çитсен, ăна тĕрĕслеме КПСС Муркаш райкомне яраççĕ. Нумайăранпа хаçат тытса курман Соловьев çавăн хыççăн сасартăк хаçатпа интересленме пуçлать. Хаçатăн кашни çĕнĕ номерне çавăркала-çавăркала пăхать. Анчах кĕтни çук та çук...

— Анатолий — тет вăл 10-мĕш класра вĕренекен хăйĕн ывăлне.—Лар сĕтел хушшине: обкома çыру çыратпăр.

— «Епле-ха Федоров А. Ф. парти ретне лекме пултарнă?-»—калама пуçлать ашшĕ. Ывăлĕ çырать.

Улми йывăççинчен аякка ӳкмест, тесе каласшăн мар эпир. Тен, Анатолий хăйĕн ашшĕ чăнахах та «тăшмана тăрă шыв çине кăларать», тесе шутланă пулĕ. Тен, вăл А. Ф. Федоров 1937 çулта парти членĕн кандидатне, 1940 çулта парти членне кĕнĕ чухне ăна рекомендаци паракансенчен пĕри никам та мар, унăн ашшĕ— Г. И. Соловьев пулнине те пĕлмен пулĕ. Çавăнпа эпир ăна айăпласа нимĕн те каласшăн мар. Анчах вăл çакна пĕлтĕр: унăн ашшĕ ирсĕр ĕç тунă, элек сарнă, çакăн пек чухне тăван аттене те тĕрĕс çул кăтартма тăрăшас пулать. Çавăн пек совет çыннин тивĕçĕ.

Юлашкинчен эпир вулакансене кăмăллă хыпар пĕлтерсе хăваратпăр: Соловьев çырнисем пĕтĕмпех суя пулнине палăртса, элекçĕ Соловьева хăйне парти ретĕнчен кăларса, çирĕп ответ тыттарнă.

Тимĕре тутăх пĕтерет, элекçе хăйĕн чĕлхиех пĕтерет, тейĕпĕр эпир çак фельетона вĕçлесе.

А. КАЛКАН.

Политикăлла тата наукăлла пĕлӳсем сарас ĕçе лайăхлатар

СĔРПӲ. Политикăлла тата наукăлла пĕлӳсем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен Пĕтĕм Союзри Обществăн районти уйрăмĕн отчетпа суйлав пухăвĕ пулса иртрĕ.

Отчетлă доклад тăрăх пухура 6 çын тухса каларĕ. Вĕсем общество уйрăмĕ районти рабочисемпе колхозниксен тата интеллигенцин нумай енлĕ ыйтăвĕсене тивĕçтерейменнине палăртрĕç. Общество уйрăмĕ ĕçсыннисем хушшинче КПСС XIX-мĕш съездĕн решенийĕсем тата И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле ĕçĕ çинчен ытла та сахал ăнлантарать. Ку темăсемпе иртерекен лекцисен идейăлла шайĕ çӳлти вырăнта тăмасть.

Районти уйрăм лекцилле пропаганда тăвас ĕçе хăйĕн пур членĕсене те активлă хутшăнтарайман. Сăмахран, обществăн действительнăй членĕсем Крюков, Тюмеров, Орлов юлташсем виççĕшĕ те пысăк квалификациллĕ ялхуçалăх специалисчĕсем, анчах отчетлă тапхăрта вĕсем пĕр лекци те вуласа паман.

Общество ĕçĕсене лайăхлатса пыма районта пысăк вăйсем пур. Хуçалăхпа культура строительствин тĕрлĕ отраслĕсенче çĕршер çын ĕçлет. Анчах обществăн районти уйрăмĕнче тăракан юлташсен йышĕ сахал.

Пуху районти уйрăмăн пур членĕсене те лекци вулама явăçтарас тĕлĕшпе ятарласа секцисем тума йышăнчĕ. Действительнăй членсен йышĕ хутшăннă май, пуху районти уйрăмăн правленине 3 çынтан суйласа хăварчĕ. Обществăн республикăри конференцине яма икĕ делегат суйларĕ.

Н. ВОЛКОВ,
(Хамăр корр.).

„Нарспи“ драма пирки

Чăваш литературин классикĕ К. В. Иванов çырнă «Нарспи» поэмăн историйĕ çултан çул пуянланса пырать: «Нарспи» чăвашла темиçе изданипе тухнă, ăна вырăсла виçĕ хут куçарса Мускавра тата Шупашкарта кăларнă; «Нарспие» тутар, мордва, удмурт, мари чĕлхисене куçарнă; халĕ тата çак вилĕмсĕр произведение украин чĕлхине куçараççĕ.

«Нарспи» поэма тăрăх композиторсем опера çырчĕç, драматургсем драмăсем çырса пачĕç. Çав драмăсенчен пĕри, В. Алагерпа А. Калган çырни, кăçал иккĕмĕш хут пичетленсе тухрĕ.

Эпир çак драма пирки пĕр-ик сăмах каласшăн.

Драма çырасси—çăмăл ĕç мар. Драматургăн, литература произведенийĕсем çырас ăсталăха пĕлнисĕр пусне, сцена искусствин «законĕсене» те пĕлмелле, драмăри геройсене хăйĕн драмине çырнă чухнех вĕсем сцена çинче мĕнле пулмаллине курмалла, вĕсен сассине илтмелле.

«Нарспи» драма пирки вара çакна калас пулать: ăна çырасси çапах та çĕнĕ драма çырассинчен йывăр пулман. Мĕншĕн тесен «Нарспи» поэма хăй те—çырри таран драмăлла произведени. К. Иванов «Нарспийĕ» пирĕн драматурги аталанăвĕнче тивĕçлĕ вырăн йышăннă, унăн традицине пуçласа янă. «Нарспи» тăрăх драма çыракансене çакă та пулăшнă: пирĕн литература критикинче халĕ ĕнтĕ «Нарспи» пирки, Иванов творчестви пирки тавлашу çук: тĕп ыйтусене татса панă.

«Нарспи» драмăра, ăна К. Иванов поэмипе танлаштарсан, эпир мĕн куратпăр-ха? Драмăри геройсем, тĕпрен илсен, — поэмăри геройсемех. Кусемсĕр пусне драматургсем сцена çине Михетĕрĕн пĕр тарçине кăлараççĕ (ăна вĕсем Сементей тесе ят панă). Драмăра тата шăпăрçă пур. Силпи ялĕнчи çынсене, туй халăхне асра тытса, драматургсем драмăна çак персонажсене кĕртнĕ: хăйматлăх (Силпи чăвашĕ), мăн кĕрӳ (такмак ăсти), элекçĕ хĕрарăм, куштан каччă, яш-кĕрĕмсем, туй халăхĕ тата ытти те.

Алагерпа Калган хăйсен драмине йĕркеленĕ чухне, «Нарспи» поэмăн шухăшне асра тытса, вырăнĕ-вырăнĕпе хăйсем çырнă, «Нарспирен» 13-мĕш сыпăка («Атте-анне») тата ытти хăшпĕр вырăнсене ним улăштармасăрах илнĕ. Ку вырăнсем драмăра чи паха та вăйлă вырăнсем пулса тăраççĕ. Вĕсенче К. Ивановăн ăсталăхĕ курăнса кăна мар, чăннипех те çиçсе тăрать.

Чăваш литературинчи критикăра К. В. Иванов творчестви пирки, «Нарспи» поэма пирки икĕ тĕрлĕ шухăш, икĕ тĕрлĕ «теори» пулчĕ.

Пĕрремĕш шухăш—«Нарспие», К. В. Ивановăн пĕтĕм творчествине марксистла-ленинла тĕпчесе каланă шухăш. Вăл çакăн пек: К. В. Иванов—поэт-демократ, чăваш поэзийĕн классикĕ; унăн творчестви 1905—1907 çулсенчи революци тапхăрĕнче вырăссен классикла литературин прогрессивлă идейисенчен вăй илсе аталаннă: çав прогрессивлă идейăсем «Нарспи» поэмăн тĕп шухăшне палăртнă, тĕрĕс çулпа янă; К. Иванов хăйĕн поэминче пуянсен пусмăрне хирĕç, революцичченхи тĕттĕм ялăн тĕпмĕшĕсене хирĕç кĕрешме чĕннĕ; çакна Сетнерпе Нарспи кĕрешĕвĕ, ĕçĕ-хĕлĕ, çутă та таса юратăвĕ кăтартса парать. «Нарспи» — чăвашсен малтанхи нацилле произведенийĕ, унăн литературăри тата обществăпа политика тĕлĕшĕнчи пĕлтерĕшĕ калама çук пысăк.

Теприсем (пĕр-ик «критик»!) К. Иванов творчестви пирки пачах урăхла шухăш калама пăхрĕç. Вĕсем чăваш литературин классикĕ çинчен, унăн вилĕмсĕр поэми çинчен тăмсайла «теори» шухăшласа кăларнăччĕ. Вĕсем ĕнентерме хăтланнă тăрăх, К. Иванов—кулак поэчĕ имĕш; «Нарспи» поэма тĕн сĕрĕмĕ, реакцилле шухăшсем сарать имĕш. Хăйсен киревсĕр «тезисне» çирĕплетсе пама вĕсем «Нарспирен» «турă çынни», «пӳлĕх» тенĕ вырăнсене илнĕччĕ; Сетнер çинчен: вăл кулака (Михетере) хӳтĕлесе вилнĕ, тенĕччĕ. Çапла вара вĕсем: пире Иванов кирлĕ мар!—тесе çухăратчĕç.

Çак «теорие» марксистла-ленинла литература критики тахçанах çапса аркатрĕ.

Пирĕн драматургсем «Нарспи» тăрăх драма çырнă чухне çав икĕ шухăшран («теорирен») хăшне асра тытса ĕçленĕ-ши? Хăш шухăшĕ драмăра палăрса юлнă-ши?

Пирĕн шутпа, «Нарспи» поэма тăрăх драма çыракансемшĕн пĕрремĕш шухăш ертсе пыракан шухăш пулмалла пулнă. Анчах, шел пулин те, вĕсем пĕрремĕш шухăша (тĕрĕссине) вĕçне çитиех çирĕп тытса пырайман. Драмăра вырăнĕ-вырăнĕпе иккĕмĕш шухăшăн витĕмĕ (влиянийĕ) сисĕнет. Çакă вăл Алагерпа Калган çырнă драмăн пысăк çитменлĕхĕ пулса тăрать.

К. В. Иванов—поэт-гуманист. Вăл чăнчăн этеме мухтанă, унăн вăйĕпе хавхаланнă. Çавăнпа та вăл, хăйĕн поэмине хура реакцин ирсĕр çулĕсенче çырнă пулин те, этем çинчен, унăн вăйĕ çине шанса, ĕмĕр кивелми, ниçан тĕксĕмленми йĕркесем çырнă.

Анчах тĕпĕн драмăна çав йĕркесене кĕртмен. Вĕсене поэт хăй ятĕнчен каланă, çавăнпа кĕртмен, тейĕç. Кун пек калани пачах та тĕрĕс мар, мĕншĕн тесен Ивановăн поэмăри ытти хăшпĕр йĕркисемпе авторсем аванах усă курнă. Поэтăн этеме, унăн вăйне мухтакан йĕркисене драмăна кĕртни мухтава тивĕçлĕ ĕç пулнă пулĕччĕ.

Çав чаплă йĕркесем драма «Прологĕнче» пулмалла пулнă, анчах пирĕн драматургсем ун вырăнне революцичченхи чăваш çамрăкĕсене çакăн пек юрлаттараççĕ:

Çăтмахри пек туйăнать
Аслă Силпи ялĕнче,
Анчах пирĕн телейсем
Аслă пӳлĕх аллинче(?)

Çакăн пек юрлама, ун чухне, тен, пĕр çын, ик-виç çын... пултарнă пулĕ, тейĕпĕр, анчах драмăра ку юрра, Алагерпа Калган каланă тăрăх, вăйăри çамрăксем **«пурте»** юрлаççĕ. «Нарспи» поэмăра çамрăксен «телейĕсем аслă пӳлĕх аллинче» пулни çинчен каланисем çук, К. Иванов поэт ниçта та ун пек каламан. «Нарспири» уйрăм геройсем «турă», «пӳлĕх» сăмахсене калаççĕ, анчах К. Иванов халăха ун пек калаттарман.

Çак шухăша хускатнă май В. Г. Белинскин «Гоголь патне янă çырăвĕнчен» пĕр вырăна аса илес килет. Белинский, Гоголĕн йăнăш шухăшĕсене критиклесе, вырăс халăхĕ çинчен: «Вырăс халăхĕ вара турă ятне, хăйĕн хăшпĕр вырăнĕсене хыçкаласа асăнать», тесе çырнă. М. Горький те халăх атеизмне пĕрре çеç мар кăтартса панă.

Революцичченхи чăваш халăхĕ пирки те Белинский каланă пекрех каласан йăнăш пулас çук, тесе шухăшлатпăр эпир. Вăл çамки çурăличчен кĕлтăвакан халăх пулман, вăл хăйĕн «телейĕсене аслă пӳлĕх аллине» пама шутласа пурăнман.

Эпир «Нарспи» поэмăри геройсене пурне тăрăх та шутласа тухма пултаратпăр. Анчах ятсăр геройсене шутласа кăларма хал та çитес çук; вĕсем унта çĕршер те пиншер, унта кашни сыпăкрах халăх курăнса тăрать, поэмăра халăх сывлать, халăх чĕри тапса тăрать. Ялти çамрăксем (каччăсемпе хĕрсем), туйра сикекен çынсем, уйра ĕçлекен ĕçсыннисем,—çаксем пурте халăх сăнарĕ.

Акă вăл чăваш халăхĕ:

Чăваш кĕпи улача,
Хир варринче кăн-кăвак,
Ĕçчен чăваш вăкăр пек,
Юрла-юрла ĕç тăвать.

Ку картинăна сцена çинче пĕр самантлăха та пулин кăтартасчĕ. Ăна çакăн пекрех тăвасчĕ: тинĕс пек хумханса ларакан ылтăн уй, унта çĕршер çын ĕçлет, хĕрарăмĕ-арçынĕ, ачи-пăчи, çурлисави, сенĕкĕ... Çакă вăл «Нарспири» халăх сăнарне кăшт та пулин кăтартса парĕччĕ.

Çакăн пек сăнарлă халăх XIX-мĕш ĕмĕрте, пирĕн шутпа, «аслă пӳлĕхе», вырăс халăхĕ пекех, хăйĕн хăшпĕр вырăнĕсене хыçкаласа асăннă.

Анчах чăваш халăхĕ ун чухне, ытти халăхсем пекех, асапра пурăннă, хĕн-хур, хурлăх тӳснĕ, унăн ывăл-хĕрĕсем хăш чухне халран та кайнă, турă çине те шанса пăхнă,—ĕç тухман. Апла пулин те пусмăрлакансене хирĕç кĕрешме халăх Сетнер пек паттăрсем ӳстернĕ. Паллах, вĕсен çулĕ такăр пулман. Шухăшĕсем те тӳрех уçăлса çитнĕ теме çук.

К. В. Ивановăн Сетнерĕ ун чухнехи çак социалла пусмăра чĕрипе те, ăсĕпе те туять. Вăл çав ирсĕр тĕнчене мĕн тери курайманни Нарспие каланă сăмахсенчен лайăх курăнать:

— Пĕртен пĕрех пуçăм пур,
Вĕри юнлă чĕрем пур,
Ватă карчăк аннем пур,
Урхамах пек утăм пур.
Вĕсенчен те хаклăрах—
Чунăм савни, эсĕ пур,
Анчах сана та паян
Туртса илен тăшман пур.
Вăл тăшмана пĕтерме
Икĕ вăйлă аллăм пур,
Анчах ăна пĕтерсен,
Унтан усал тĕнче пур.

«Усал тĕнче»—вăл эксплуатаци тĕнчи, пусмăр тĕнчи, капитализм обществи. Ĕçсынни ачи, Сетнер, тăшмана пĕтерме пултарать, анчах тăшмансен—михетерсемпе тăхтамансен тĕнчипе пĕтерме унăн вăйĕ çитмест, мĕншĕн тесен ун чухне вăл пĕччĕнрех пулнă. Çапах та Сетнер «усал тĕнчерен» мĕнле те пулин хăтăласшăн, анчах çамрăк Сетнерĕн ĕмĕчĕсем те «çамрăкрах». Вăл тарăхса çитет те: «Аяккалла ку ялтан вĕçеттĕм те кайăттăм», тет.

Çапла, Сетнер урăх тĕнче çинчен, **ирĕклĕ пурнăç** çинчен ĕмĕтленет. Çак шухăша драма авторĕсем тĕрĕс ăнланайман. Драмăри Сетнер мещенле этем пекрех пулса тухнă: унăн шухăш-кăмăлĕ—кирек мĕнле тĕнчерен те, кирек мĕнле обществăран та «аякра» пулас шухăш-кăмăл. Акă пирĕн драматургсем Сетнера мĕн калаттараççĕ:

Хура вăрман варрине
Пĕчĕк кăна пӳрт лартса,
Пурăнăттăм савнипе,
Ĕмĕр-ĕмĕр савăнса...

Ку йĕркесене, паллах ĕнтĕ, «Нарспи» поэмăн тĕп шухăшне ăнланман пирки драмăна кĕртнĕ. Сăмах май каласан, çакăн пек шухăша эпир тата тепĕр писатель произведенийĕнче тĕл пулатпăр. Ф. Уярăн «Шурча тăвращĕнче» романĕн тĕп геройĕ—Ухтиван кĕрешӳ тĕллевне акă мĕнле ăнланать: усал-тĕсĕле çĕр çинче пĕтернĕ хыççăн «вара ешĕл вăрман варрине çурт туса лартасчĕ, кăмăл туличчен купăс каласа савăнасчĕ...» (52 стр.).

Çак цитатăсенче, иккĕшинче те, патша вăхăтĕнче, сăмахран, XIX-мĕш ĕмĕрте, пусмăра хирĕç пынă кĕрешĕве хутшăннă чăваш хресченĕсем çинчен каланă. Паллах, ун чухнехи хресченсен ĕмĕчĕсенче айванла, кулăшла шухăшсем те пулма пултарнă, çапах та çав шухăшсем хушшинче вĕсен тĕп ыйтăвĕ яланах çиеле тухса пынă: вăл—**ирĕке тухас, çĕр илес, пусмăра пĕтерес ыйту.**

Çавăн пек çитменлĕхе кăтартса парсан, хăшпĕр «критиксем» лăх-лăх кулса илесçĕ те: «Сетнер марксист пулман-çке...», теççĕ. Тĕрĕссипе каласан, ку вырăнсăр кулă, айванлăх,—урăх нимĕн те мар. Марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене йĕркеллĕ вуланă çынсем ун пек калас çук. Пирĕн кашни ыйту çине, обществăри кашни явлени çине, кашни тапхăр, кашни самана çине марксизм-

Ревизи комиссийĕсен ĕçĕнчи хăшпĕр çитменлĕхсем пирки

Ревизи комиссийĕ колхоз правленийĕ хуçалăха ертсе пырас ĕçсене мĕнле тунине тĕрĕслесе тăма тивĕçлĕ. Ревизи комиссине çак ответлă ĕçе тума артелĕн аслă органĕ—колхозниксен аслă пухăвĕ полномочи панă. Ялхуçалăх артелĕн Уставĕ тăрăх ревизи комиссийĕсем çулталăк хушшинче 4 хутчен ревизи туса ирттермелле. Çакă вăл артель ĕçĕнчи çитменлĕхсене вăхăтра палăртса тӳрлетмелли тĕп майсенчен пĕри пулса тăрать.

Анчах та республикăри колхозсенче ревизи комиссийĕсем хăйсен ĕçне тӳррĕн пурнăçласа пыраççĕ теме çук-ха.

1953 çулхи пĕрремĕш квартал иртсе кайрĕ. Пур колхозсенче те пĕрремĕш кварталшăн ревизи туса пĕтерме вăхăт ĕнтĕ. Апла пулин те нумай колхозсенче çак ĕç кая юлса пырать. Пĕр Етĕрне районĕнчи колхозсенче кăна пĕрремĕш кварталшăн ревизи туса пĕтернĕ. Ытти районсенчи чылай колхозсенче пĕрремĕш кварталшăн ревизи тума халĕ те тытăнман-ха. Калинино районĕнчи 3 колхозра кăна ревизи тунă, 22 колхозра ревизи тума пачах та тытăнман.

Колхозсенчи отчетлă тата отчетпа суйлав пухăвĕсенче колхозниксен массисем правленисен ĕçĕнчи йăнăшсемпе çитменлĕхсене мĕнле пĕтермелли çинчен, колхозниксен пурнăçне лайăхлатас тата артелĕн обществăлла хуçалăхне тĕреклетес тĕлĕшпе мĕнле ĕçсем тума кирли çинчен каласа хăварчĕç. Колхозниксем отчетлă пухура хушса хăварнисене правленисем мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине ревизи комиссийĕсен вăхăтра тĕрĕслемелле. Коллективлă, колхозлă хуçалăхăн пурлăхне мĕнле тытса пынине, учет ĕçне, тырăсене вăхăтра акса хăварнине тата ытти ĕçсене те ревизи комиссийĕсен вăхăтра тишкерсе тăмалла.

Калас пулать, çитменлĕхсем кашни колхозрах пур. Çитменлĕхсем уйрăмах ревизи комиссийĕ начар ĕçлекен колхозра ытларах пулаççĕ. Калинино районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра учет ĕçне япăхтарса янă. Йĕрке тăрăх колхозра счетовод ĕçне 16 кĕнеке тăрăх туса пымалла. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра счетовод ĕçĕнче 6 кĕнеке пачах туман. Кунти руководительсем çак тарана çитмех инвентарь кĕнекине, тĕп счетсен кĕнекине, ĕçкунĕсене çырса пымалли кĕнекесене туман. Икĕ кĕнекере учет ĕçне инструкцие пăсса тунă, документсене тĕрĕс шута илмен, вĕсене йĕркеллĕ çырса пымаççĕ. Фермăсенче учет ĕçне çителĕксĕр йĕркеленĕ. Учет ĕçне çакăн пек япăх туса пынипе, паллах, колхозра Устава пăснă тĕслĕхсене çийĕнчех курса тӳрлетме май çук.

Колхозсенчи ревизи комиссийĕсем начар ĕçленине халех пĕтерес пулать. Хăшпĕр комиссисем кварталшăн ревизи тунă чухне кассăна тĕрĕсленипе тата материальнăй пурлăхсене шута илнипе тата вĕсене ăçта расходланине пăхса тухнипе кăна лăпланса лараççĕ. Кун пек туни тĕрĕс мар. Ревизи комиссийĕсен колхоз правленийĕ хуçалăха ертсе пырас тĕлĕшпе тăвакан пур ĕçĕсене те тĕплĕн тишкерсе тухмалла. Правлени ĕçне уйрăмах тимлĕн тĕрĕслемелле. Приходпа расход сметине пурнăçласа пынине, фермăсенче ĕç мĕнле пынине, колхоз пурлăхĕ сыхланса тăнине, ĕçкунĕсене тĕрĕс çырса пынине, колхозниксене ĕçленине кура аванс шучĕпе тырă тĕрĕс панине, лайăх ĕçленĕшĕн хушса тӳлемелли йĕркене пурнăçласа пынине—çаксене пурне те ревизи комиссийĕн тĕплĕн тĕрĕслемелле.

Ревизи комиссийĕн ялхуçалăх артелĕн Уставне, партипе правительство ялхуçалăх тĕлĕшпе йышăннă постановленисене тата ревизи тумалли инструкцие лайăх пĕлмелле.

Колхозсенчи ревизи комиссийĕсен ĕçне йĕркелесе ертсе пырасси районти организацисенчен, чи малтан районти ялхуçалăх пайĕнчен нумай килет. Колхозсенчи ревизи комиссийĕсен ĕçне райисполкомăн ларăвĕсенче пăхса тухмалла. Çакă вăл комиссисен ĕçри ответлăхне ытларах ӳстерме пулăшать. Етĕрне райсовет исполкомĕ 1953 çулхи апрель уйăхĕнче приходпа расход сметисене пур колхозра та пăхса тухнă. Райисполком тĕрĕс ертсе пынипе пула, çак районта производство планĕсене, приходпа расход сметисене пур колхозсенче те вăхăтра туса хатĕрленĕ, производство заданийĕсене бригадăсемпе фермăсене панă.

Т. ВАСИЛЬЕВ.

Редакцие килнĕ çыру

Строительство ĕçĕсен хакне йӳнетмелле

Республикăри нумай строительство организацийĕсенче механизмсемпе çителĕксĕр усă кураççĕ, ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ, материалсене перекетлемеççĕ, накладной расходсем ытла та пысăк. Суртсене вăхăтра туса пĕтермен, ĕçе лайăх тумал тĕслĕхсем те сахал мар. Çаксем пурте строительство ĕçĕсем хакланасси патне, пысăк накладной расходсем патне илсе пыраççĕ.

Кăçалхи пĕрремĕш кварталта хулари строительствăлла монтаж кантурĕ строительство хакне 26 процент хаклалатнă. Çакă вăл пуринчен ытла материалсене перекетлĕ расходламаннинчен тата материалсем хатĕрленĕ чухне пысăк тăкаксем тунинчен килнĕ. Асăннă кантур хĕллехи вăхăтра чул хатĕрлеттернĕ. Смета тăрăх пĕр кубометр чул 82 тенкĕ тăмалла пулсан, кантур хатĕрленĕ чул вара 122 тенкĕ те 97 пуса ларнă.

Кунта ĕçе планлассине йĕркелемен: çуллахи вăхăтра тумалли ĕçсене хĕле хăварнă пирки пысăк тăкаксем пулнă. Смета тăрăх тимĕрпе бетон изделисен пĕр кубометрĕ 643 тенкĕ тăмалла пулсан, чăннипе хĕллехи вăхăтра 767 тенке ытла ларнă. Строительство материалĕсем перекетлессишĕн тимлĕн кĕрешмен тĕслĕхсем сахал мар. Март уйăхĕнче 36 хваттерлĕ çурт тата общежити тунă çĕрте хăма, цемент, хăйăр нормăран ирттерсе чылай расходланă.

«Чăвашстрой» трестĕ педагогика институчĕн çурчĕсене тăвас ĕçе вăраха тăсать. Çулла трест çуртăн кашни хутне купаланă хыççăн урлă витме тимĕрпе бетонран тунă япаласем туса хатĕрлемен. Хĕлле çав ĕçе тума хакла ларать. Çавăнпа трест строительство ĕçĕсене чарнă, кӳрсе килнĕ 300 пин кирпĕче тата тĕрлĕ ытти хатĕрсене урăх вырăна куçарнă.

Малта пыракан стройкăсенче строительство хакне йӳнетме, пур ĕçе те лайăх йĕркелеме пулăшакан организацилле-техникăлла мероприятисен планне туса хатĕрлеççĕ, рационализаторсемпе изобретательсен пултарулăхне вăйлатса пыма, наукăпа техникăн çитĕнӳвĕсемпе, малта пыракансен меслечĕпе анлăн усă курма тăрăшаççĕ. Анчах «Чăвашстрой» трестĕ 1953 çул валли организацилле-техникăлла мероприятисен планне халиччен те туса çитермен. Стахановецсем, рационализаторсемпе изобретательсем ĕçе механизацилес, материалсене перекетлес тĕлĕшпе мĕнле мероприятисем туса ирттермеллине пĕлмеççĕ.

Накладной расходсем ытлашши пысăк пулнипе трест кăçалхи пĕрремĕш кварталта чылай убыток тунă. Çакăнтан трест руководителĕсен (управляющийĕ И. Куприянов юлташ) тивĕçлĕ вывод тумалла, хуçасăрлăха пĕтермелле, строительствăпа монтаж ĕçĕсен планне уйăхран уйăха тултарса пыма тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ строительство хакне пилĕкçуллăхра 20 процентран кая мар йӳнетме палăртрĕ. Çак задачăна чыслăн пурнăçлас тесен, строительство ĕçĕсене малалла механизацилемелле, строительствăн индустрилле меслечĕсемпе анлăрах усă курмалла, ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пымалла, ĕç пахалăхне лайăхлатнă вăхăтрах строительство срокĕсене кĕскетмелле, накладной расходсене чакармалла. Хуçалăх руководителĕсен экономикăпа финанс ыйтăвĕсемпе тĕплĕнрех интересленмелле, шалти резервсемпе, материалсемпе, ĕç вăйĕпе лайăхрах усă курма тăрăшмалла.

В. ДАНИЛОВ,
Чăваш АССР Коммунальнăй банкĕн управляющи заместителĕ.

Малта пыракан колхозниксенчен пример илмелле

КРАСНОАРМЕЙСКИ. Ленин ячĕпе тăракан колхозра çураки ăнăçлă пырать. Колхозниксем уй-хир ĕçĕсене кĕске вăхăтра тата лайăх ирттерессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Кăçал колхозăн 260 гектар çине пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши культурăсем акмалла. Колхоз çак кунсенчех мĕнпур ирхи культурăсене акса пĕтерет.

Уй-хир бригадисемпе уйрăм колхозниксем хушшинче çураки планне ирттерсе тултарассишĕн социализмла ăмăрту сарăлнă. Ăмăртура И. Прохоров коммунист ертсе пыракан 2-мĕш бригада малта пырать. Бригадăри сухаçăсемпе акакансем В. Михайлов, Н. Димитриев, У. Егорова, Л. Ильина, И. Антонов юлташсем пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ. Вĕсем ĕç нормине 120—130-шар процент тултарса пыраççĕ. Иккĕмĕш бригадăри сухаçăсен примерĕпе хавхаланса, пĕрремĕш бригадăри В. Михайлов, Ф. Якимов, В. Игнатьев сухаçăсем те тăрăшса ĕçлеççĕ.

Анчах та 4-мĕш бригадăра ĕç пахалăхĕшĕн тăрăшни курăнмасть. Кунта агротехникăна пăсса ĕçлеççĕ. Кĕрхи сĕртме туса хăварман вырăнсене 4—9 сантиметр тарăнăш кăна сухалаççĕ. Уйрăмах В. Яковлев, Е. Григорьева, Ф. Васильева, А. Софронова колхозниксем хăйсен ĕçне япăх туса пыраççĕ. Колхоз руководителĕсем çак çитменлĕхсене курса тăраççĕ, анчах ĕç пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

Лайăх ĕçлекен колхозниксен опытне ытларах сарса пымалла. Ĕçри çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерсе пыни кирлĕ. Пахалăхшăн, тырпул тухăçлăхне ӳстерессишĕн ырми-канми кĕрешесси—кашни колхозникăн тивĕçĕ.

И. АФАНАСЬЕВ.

Парторганизаци секретарĕсен семинарĕ

ЧУРАЧĂК. КПСС райкомĕ учрежденисемпе шкулсенчи парторганизаци секретарĕсен семинарне ирттерчĕ. Унта пулнисем «И. В. Сталин социализмран коммунизма куçмалли малтанхи тĕп условисем çинчен» темăпа лекци итлеççĕ. Партипе государство дисциплинине çирĕп тытса пырасси çинчен райком секретарĕ С. Алюров юлташ доклад туса пачĕ.

Парторганизаци секретарĕсем пĕр-пĕрин опычĕпе паллашрĕç.

И. КОНСТАНТИНОВ.

КӲРШĔ РЕСПУБЛИКĂСЕНЧЕ

Хусанти В. И. Ульянов-Ленин ячĕпе тăракан университетра вырăс халăхĕн ывăлĕсемпе тата хĕрĕсемпе пĕрле Совет Союзĕнчи нумай халăхсен çамрăкĕсем вĕренеççĕ.
ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Хусанти В. И. Ульянов-Ленин ячĕпе тăракан государство университечĕн студенчĕсем.

Б. ДЕНИСОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Тутар республики паянхи кун

Тутар республикинчи ĕçсыннисем, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, партин XIX-мĕш съезчĕн историллĕ решенийĕсемпе, Сталин юлташ съездра тухса каланă сăмахпа, унăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă гениллĕ произведенийĕпе хавхаланса, пилĕк çуллăх плана срокчен тултарас шухăш-ĕмĕтпе пурăнаççĕ. Пилĕкçуллăха ăнăçлăн пурнăçлани пирĕн çĕршыв социализмран коммунизма куçса пынă çĕрте пысăк утăм туни пулать.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви пирĕн çĕршывра коммунизм тăвас аслă ĕçе мĕнпур вăя мобилизацилеме чĕнсе калани çине ответлесе, Пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен уявне—Майăн 1-мĕшне тивĕçлипе кĕтсе илес тесе, республикăри ĕçсыннисем Май уявĕ умĕнхи социализмла ăмăртăва анлăн сарса ячĕç. Ăмăртăва пуçарса яраканĕ Хусанти В. И. Ленин ячĕпе тăракан йĕтĕн комбиначĕн коллективĕ пулчĕ. Комбинат коллективĕ Тутар АССР-ĕнчи промышленность предприятийĕсенчи, транспортпа стройкăсенчи рабочисене, инженерсемпе техниксене Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва сарса яма чĕнсе каларĕ. Йĕтĕн комбиначĕн коллективĕ тăватă уйăхри плана 104,7 процент тултарма, çур çул планне Тутар АССР-ĕ 33 çул тултарнă кун—июнĕн 25-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательство илчĕ. Рабочисем, инженерсемпе техниксем çĕнĕ техникăпа туллин усă курма, ĕç тухăçлăхне 2 процент ӳстерме, Майăн 1-мĕшĕ тĕлне 5 тонна йĕтĕн чĕртаварĕ, 20 тонна çип перекетлеме, перекетлесе хăварнă чĕртаварпа çипрен 42 пин метр пир-авăр тĕртсе кăларма, 20 тонна топливо перекетлеме сăмах пачĕç. Комбинат пĕрремĕш кварталта ăнăçлă ĕçлерĕ: пĕтĕм продукци туса кăлармалли плана—115 процент, вăл шутра март уйăхĕнчи плана 127,9 процент, таварлă продукци туса кăлармалли плана—115,4 процент, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана 105,4 процент тултарнă, продукцин хăйне ларакан хакне чылай чакарнă. Коллектив пĕрремĕш кварталта 10,4 тонна йĕтĕн чĕртаварĕ, 21,2 тонна çип перекетленĕ, перекетленĕ чĕртавартан 58,2 пин метр пир-авăр тĕртсе кăларнă. Апрель уйăхĕнче коллектив тата хастарлăрах ĕçлерĕ. Хăйĕн обязательствисене чыслăн пурнăçларĕ.

Йĕтĕн комбиначĕн коллективĕ чĕнсе калани çине ответлесе, республикăри ĕçсыннисем социализмла ăмăртăва анлăн сарса ячĕç, Пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен уявне производствăри çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илчĕç.

Вахитов ячĕпе тăракан çу комбиначĕнчи мĕнпур заводсенче социализмла ăмăрту кунтан-кун вăйланса пычĕ. Комбинат коллективĕ 1953 çулхи пĕрремĕш кварталта пĕтĕм продукци туса кăлармалли плана 103,1 процент, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана 101,6 процент тултарнă. Май уявĕ ячĕпе илнĕ социализмла обязательствăсене пурнăçласа, комбинатăн супăнь тăвакан завод коллективĕ апрель уйăхĕн малтанхи 5 кунĕ хушшинче кăна планран ирттерсе 50 тонна ытла супăнь туса кăларнă.

Паха тирсенчен япаласем тăвакан комбинат çĕршыври пысăк предприятисенчен пĕри шутланать. Комбинатра ĕçлекенсем тăватă уйăхри плана пур ассортиментсем тăрăх та апрелĕн 26-мĕшĕ тĕлне тултарма, планпа пăхниччен пĕр процент ытларах пĕрремĕш сортлă продукци туса кăларма, ĕç тухăçлăхне ӳстерме, планран ирттерсе икĕ миллион тенкĕлĕх накоплени пама, 100 пин дециметр паха тир, икĕ пин метр пир-авăр, 25 тонна топливо перекетлеме, перекетленĕ материалтан арçынсем валли 5.000 пальто çухави çĕлеме обязательство илчĕç. Коллектив çав обязательствăсене тултарассишĕн тимлĕн кĕрешрĕ. Паха йышши тиртен япаласем тăвакан виççĕмĕш фабрикăри стахановкăсем Мосалимова, Сибгатуллина, Шакирова, Нурисламова тата ытти юлташсем Май уявĕ умĕнхи кунсенче сменăри задание 160—170 процент тултарса пычĕç. Паха йышши тиртен япаласем тăвакан пĕрремĕш фабрикăри паллă стахановка Сара Нигматзянова та ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартать. Вăл январь уйăхĕнчи задание 195 процент, февраль уйăхĕнчи задание—211 процент, март уйăхĕнче вара 215 процент тултарнă. Виçĕ уйăх хушшинче вăл продукцин хăйне ларакан хакне 1.787 тенкĕлĕх чакарнă. Пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен уявне—Майăн 1-мĕшне Нигматзянова юлташ сакăр уйăхри ĕç нормине тултарнипе кĕтсе илчĕ. Ку фабрикăри стахановецсем Гиниятуллина, Габдрахманова, Джалаев, Кадырова тата ытти юлташсем кăçалхи виçĕ уйăх хушшинче 4—5 уйăхри производство заданийĕсене тултарнă. Халĕ вĕсем стахановла вахтăна тăрса сменăри заданисене кулленех 200 е ытларах процент тултарса пыраççĕ.

Кăçал Хусан портне тăвас тата Хусан хулине шывран хӳтĕлес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттермелле. Социализмла ăмăртăва хутшăнса, порт строителĕсем уйăхри плана срокчен, ирттерсе тултарма, ĕç тухăçлăхне планпа пăхниччен 18 процент чухлĕ ӳстерме, строительство ĕçĕсен хакне 5 процент чакарма пулчĕç. Халĕ порт строителĕсен коллективĕ илнĕ обязательствăсене ăнăçлă пурнăçлассишĕн кĕрешет.

Социализмла ăмăртура Хусанти холодильникăн, Кукморти кирпĕч завочĕн, Мамадышри пир-авăр фабрикин, «Динамо» фабрикăн тата республикăри ытти нумай предприятисен коллективĕсем пысăк çитĕнӳсем турĕç. Вĕсем пĕрремĕш кварталти плана пур енĕпе те чылай ирттерсе тултарчĕç.

Республикăри нефть промышленносĕнче ĕçлекенсем те Май уявне чаплă парне хатĕрлерĕç. «Бавлынефть» трестĕн 1-мĕш номерлĕ нефтепромыслин коллективĕ Май уявĕ умĕнхи социализмла ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçларĕ. «Бугульманефть» трестĕн 2-мĕш номерлĕ нефтепромыслин коллективĕ те ăнăçлă ĕçлет.

Республикăри колхозниксем, МТС-семпе совхозсенчи работниксем ир акакан культурăсене кăçал 7—8 кун хушшинче акса пĕтерме пулчĕç. Социализмла Ĕç Геройĕ Ефремов юлташ ертсе пыракан Пăва МТС-ĕнчи механизаторсем хăйсем ĕçлекен колхозсенче ир акакан культурăсене 5—6 кун хушшинче акса пĕтерес-çĕ. Ку МТС-ри Социализмла Ĕç Геройĕ Сторожев юлташ ертсе пыракан трактор бригади «Победитель» тата Коминтерн ячĕпе тăракан колхозсен уй-хирĕсенче ĕçлет. Бригада ир акакан культурăсене 4—5 кун хушшинче акса пĕтерме пултарчĕ. Первомайски районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз республикăри пысăк колхозсенчен пĕри шутланать. Колхозăн 4 пине яхăн гектар çĕр лаптăкĕ çинче çуртри акмалла. Ку колхозра кăçал виçĕ трактор бригади ĕçлет. Вăл бригадăсенче гусеничнăй тракторсем 10, урапаллă тракторсем 5 шутланаççĕ. Çак пуян техникăпа туллин усă курни колхоза ир акакан культурăсене 8 кун хушшинче акса пĕтерме май парать.

Колхозсем пысăк çĕр лаптăкĕ çинче çурхи шыва тытса хăварчĕç. Халĕ республикăри чылай колхозсенче суха-ака ĕçĕсем хĕрсе пыраççĕ.

Ялсенчи культурăпа çутĕç учрежденийĕсем хăйсен ĕçне уй-хире, трактор бригадисене куçарчĕç. Аякри колхозсенче, уй-хир бригадисенче культурăллă массăлла ĕç туса пырас тĕллевпе республикăри библиотекăсем 2 пин куçса çӳрекен библиотека организациленĕ. Бугульмари район библиотеки çавăн пек библиотекăсем 25, Новая Письмянкари библиотека—8, Бавлыри библиотека—5 библиотека организациленĕ. Мензелинскри тата Бугульмари район библиотекисем колхозсене литература парса тăрас ĕçре автомобиль-библиотекăсемпе усă кураççĕ. Районти культура çурчĕсем тата ялти клубсем агитациллĕ-художествăллă бригадăсем организациленĕ. Бригадăра докладчиксем, концерт паракансем пур. Кзыл-Юлски районти культура çуртĕн çавăн пек бригади 6 çынтан тăрать, вăл 24 колхоза çитмелле. Кун пек бригадăсем Тумутук, Апастово, Мамадыш, Мензелинск, Нурлат тата ытти районсенче те организациленĕ.

Тутар АССР-ĕн государство музейĕ «ССР Союзне аталантармалли пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план» тема тăрăх выставка хатĕрленĕ. Выставкăна агитмашина çине вырнаçтарнă. Çураки кунĕсенче агитмашина Высокая Гора, Арск, Чурилино тата Кзыл-Юлски районсенче пулать.

Республикăри лекци бюровĕ колхозсене 20 лектор ярать. Вĕсем колхозсенче май тата июнь уйăхĕсем хушшинче 600 лекци вуласа параççĕ. Ялсенчи тата районсенчи библиотекăсене пуянлатма 300 пин тенкĕлĕх литература ярса параççĕ.

Республикăри 13 аслă шкулта тата пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан 3.678 шкулта экзамена хатĕрленес тĕлĕшпе хĕрӳллĕ ĕç пырать. Çавăнпа пĕрлех республикăри учительсем, массăлла-политикăлла ĕçе анлăн туса пырса, колхозниксене çуракине ăнăçлăн ирттерме мобилизацилес тĕлĕшпе пысăк пулăшу параççĕ.

С. НИЗАМОВ,
Тутар АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ.

ленинизм вĕрентĕвĕ енчен пăхмалла. Çак вĕрентӳ пире хăватлă хĕçпăшал — тĕрĕс метод парать, наукăра та, литературăра та тĕрĕс çул кăтартать.

К. Иванов поэт-демократ пулнă. Вăл, ытти халăхсен поэт-демократчĕсем пекех, халăх интересĕпе пурăннă, халăхран уйрăлма шутламан. К. Иванов — реалист. Вăл халăх пурнăçне тĕрĕс кăтартас ĕмĕтпе ĕçленĕ, пурнăçри явленисене нумайăшне тĕрĕс сăнласа панă.

«Нарспи»—социалла поэма. Унта тĕрлĕ класс çыннисем социалла сăлтавсене пула пĕр-пĕрне хирĕç кĕрешеççĕ.

Чухăн Сетнер михетерсене, тăхтамансене пĕтересшĕн. Тăхтамана вилĕм сунса, вăл çапла калать:

— Тĕттĕм пулĕ, кас пулĕ
Тăшман патне çитиччен.
Тăшман чĕри лăпланĕ
Хĕвел кусса тухиччен.

Чăн та, поэмăра Тăхтамана Сетнер мар, Нарспи пĕтерет. Анчах ку вăл икĕ çамрăк ĕмĕчĕ пурнăçа кĕнине пĕлтерет. Тăхтамана Нарспи вĕлерни, михетерсен «моралĕ» енчен пăхсан, «ирсĕр» ĕç. Анчах çакна манас пулмасть: михетерсен усал тĕнчинче унтан ирсĕртерех ĕçсем те пулнă. Михетерсен тĕнчи—кашкăр тĕнчи; вăл тĕрлĕ вăрă-хурахсене, тĕрлĕ ирсĕр этемсене çуратса тăнă. Калас пулать, çакна Алагерпа Калган тĕрĕс ăнланнă. Михетере вăрăсем çаратса, вĕлерсе кайни çинчен драмăра каланă вырăн питех те тĕрĕс: «Шутлап-шутлап та эп: Тăхтаман таврашсенех турĕç пуль ку ĕçе, теп» (Сементей сăмахĕ, 66 стр.). Анчах драматургсем Сетнер мĕнле тата камшăн вилнине панах ăнланман: вĕсем ăна Михетере хӳтĕлесе вилнĕ пек туса кăтартнă.

Ăна çак вырăнсем кăтартса параççĕ:

Сетнер амăшĕ.
Тур çырлахах! Мĕн пулнă?
Такам хурах кăшкăрать.
Сетнер.
Анне, наччас чупам-ха,
Сынна пулăшас пулать(?).
Сементей.
Михетере пулăшма(?)
Васканă вăл кăлăхах.

«Нарспи» поэмăра кун пекки çук, К. Иванов ун пек каламан. Поэмăри Сетнер çынсем шавланă çĕре кăна чупса пынă:

Сетнер чупса çитнĕ-мĕн,
Илтсе карчăк сассине;
Вăрă, шуйттан, пуртипе
Пуçне çурнă унăнне!
Михетере вĕлернĕ,
Мулне-мĕнне хăварман.
Сĕмсĕр-пуçсăр вăррисем
Турăран та хăраман!
Пĕтнĕ мĕскĕн Сетнер те.
Усал вăрă пуртинчен.
Кун пек усал ĕç курман
Силпи ялĕ халиччен.

Çакă пулман пулсан, Михетер пек пуянсем Нарспи ĕçне усал ĕç тенĕ пулĕччĕç, анчах михетерсемпе тăхтамансен тĕнчи çуратнă вăрă-хурахсен ĕçĕ **унтан та усал, ун пек усал ĕçе Силпи ялĕ халиччен те курман.**

Çапла ĕнтĕ, «Нарспи» поэмăра Сетнер «кулаксене хӳтĕлесе» вилни курăнмасть, ăна шăпах «усал тĕнче» пĕтерет. «Нарспи» поэмăн çак вырăнĕ ун чухнехи обществăн ăшчиккине тата та ытларах уçса кăтартать, Сетнерпе Нарспи трагедийĕн тĕп сăлтавĕсене пĕтĕçтерсе парать.

Алагерпа Калган «Нарспи» драмăна йăла енчелле сулăнтарма, ытларах йăла драми тума тăрăшнă. Нарспи асапне вĕсем социалла сăлтавсемпе мар, «унăн чĕринче юрату» çураллнипе ăнлантарса пама шутланă. Çакă драмăри Нарспи сăмахĕнчен курăнать:

Харсăр вĕри чĕремре
Юрату çуралнăшăн,
Ырă çамрăк Сетнере
Пĕтĕм чуна панăшăн,
Çак асапа куртăм эп...

Çакăн пек ĕнтĕ «Нарспи» драмăн содержани тĕлĕшĕнчи хăшпĕр çитменлĕхĕсем.

Мĕнрен килнĕ-ха вĕсем? Çав çитменлĕхсем, пирĕн шутпа, драма авторĕсем «Нарспи» поэмăн тĕп шухăшне вĕçне çити тĕрĕс ăнланманнинчен, литература критикин шухăшне уяманнинчен килнĕ. Сетнерпе Нарспи чăваш халăх ăс-тăнне ырă кăмăллă, çутă ĕмĕтлĕ геройсем пулса кĕнĕ; вĕсене пĕлмен кĕтес чăваш хушшинче çук. Драмăн задачи Сетнерпе Нарспи сăнарне пăсасси мар, вĕсен халăх ăс-тăнĕнчи ырă сăнне усрасси, вĕсен характерне, шухăш-туйăмне, ырă ĕмĕчĕсене реалистла тĕрĕс уçса парасси пулать.

Авторсем К. Иванов стильне тытса пырайман. «Нарспи» поэма чĕлхи уйри ылтăн ыраш пек таса пулсан, драма чĕлхи ун пек мар: унта пиçенсем, пухрасем, анраçарăксем, мăянсем тĕл пулаççĕ. «Чĕлхе енчен ăстаçă» тенĕ пĕр вырăнта (18 стр.) К. Иванов кун пек каламан пулĕччĕ: чăвашсем «ăста» теççĕ. Слог çитмен çĕрте «вĕт» теннине ирттерсе яма тăрăшнă. Элексĕ хĕрарăм чĕлхи те тĕлĕнтерет. Тăхтаманпа çаласнă чухне вăл «Сире» тесе калаçать.

К. В. Иванов чăваш литератури чĕлхине пуçарса янă. Вăл сăвă ăсти, чĕлхе ăсти пулнă. Драма çырнă чухне Алагерпа Калганăн çакна асра тытмаллах пулнă.

Чăваш литератури чĕлхи пуянлансах пырать, анчах «Нарспи» поэма чĕлхи те кивелмен-ха. Унăн хăшпĕр кивелнĕ сăмахĕсем К. Иванов саманине кăтартса параççĕ, вĕсем поэма хакне пачах та чакармаççĕ.

Театрта «Нарспи» драмăна лартаççĕ пулсан, сцена çинчен «Нарспи» поэмăри пек илемлĕ чĕлхе илтес килет.

«Нарспи» драмăна тĕплĕн пăхса тухса, тепĕр хут юсаса çырмалла. «Нарспи» социалла поэма пулсан, унăн социалла пĕлтерĕшĕ драмăра та поэмăринчен вăйсăр пулмалла мар,—пачах урăхла: вăл тата вăйлăрах пулмалла, тата лайăхрах курăнмалла.

В. ДОЛГОВ.

Профсоюз активĕн семинарĕсем

Чăвашоблпрофсовет партин хула тата район комитечĕсемпе пĕрле 29 районта тата 3 хулара профсоюз райкомĕсен, фабрикăсемпе заводсенчи, вырăнсенчи профсоюз комитечĕсен председателĕсен семинарĕсене ирттерчĕ.

Семинарта пулнисем валли «Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем—совет халăхĕн коммунизмшăн кĕрешмелли программи», «И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенийĕ», «Совет профсоюзĕсем—коммунизм шкулĕ» темăсем тăрăх лекцисем вуласа панă.

Ĕçсыннисем валли докладсемпе лекцисем

СĔНТĔР. Кунти вăтам шкулти учительсем районти ĕçсыннисем хушшинче тăтăшах лекцисемпе докладсем тăваççĕ. Кăçал вĕсем колхозсенче тата район центрĕнче 50 хутчен докладсемпе лекцисем вуласа панă. Вăл шутран ачасене çемьере воспитани парасси çинчен 19 лекци, партилле-политикăлла ыйтусем тăрăх тата партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем, Г. М. Маленков, Л. П. Берия, В. М. Молотов юлташсен сăмахĕсем тăрăх доклад туса панă.

Нумай пулмасть А. Квасков учитель Чкалов ячĕпе тăракан колхозра партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем çинчен, В. Соколов учитель «Броневик» колхозра «Ачасене çемьере воспитани парасси» темăпа, И. Толстов учитель «Çутçанталăкри явленисем» тема тăрăх докладсем туса пачĕç.

Кунсăр пуçне, учительсем СССР Верховнăй Совечĕн IV-мĕш сессийĕ йышăннă законсемпе постановленисем çинчен докладсемпе калаçусем ирттерчĕç.

В. ИГНАТЬЕВ.

Тĕнчери лару-тăру

ÇУРÇĔР-АТЛАНТИКА СОЮЗЕН СЕССИЙĔ МĔН КĂТАРТРĔ

Вăйлăн хĕрçăпаллакан Хĕвеланăç Европăри çĕршывсен экономикине ытларах та ытларах хавшатать. Ку политикăна хирĕç халăх массисем хытă хирĕç тăраççĕ. Çакă вăл США-па унăн Хĕвеланăç Европăри тусĕсем хушшинчи хирĕçÿсене вăйлатать. Çапла пулнине Çурçĕр-Атлантика союзне (НАТО) кĕрекен çĕршывсен совечĕн Парижра пулса иртнĕ черетлĕ сессийĕ лайăх кăтартса парать.

Сесси ĕçне Çурçĕр-Атлантика союзне кĕрекен 14 çĕршыв (США, Англи, Канада, Франци, Бельги, Голланди, Португали, Норвеги, Дани, Итали, Люксембург, Греци, Турци тата Исланди) представителĕсем хутшăнна. Сессие нумай вăхăт хушши хатĕрленнĕ. Тĕнчери общественноçа уталас тĕлĕшпе те сахалах мар вăй хуна. Реакциллĕ хаçатсем тĕнчене Совет Союзĕ хăратса тăрать, тесе тĕрлĕ хыпарсем пичетлесе кăларнă.

Сесси вăхăтĕнче те, сесси хыççăн та Çурçĕр-Атлантика союзне кĕрекен çĕршывсем хăйсем «пĕр шухăшлă» пулни çинчен, сесси ĕçĕсем «ăнăçлă вĕçленни» çинчен сахал мар каланă.

Анчах çакăнпа капитализмла çĕршывсенче тухса тăракан хаçатсем те килĕшме пултарайман. Сăмахран, Парижра тухса тăракан «Монд» хаçат çырса пĕлтернĕ тăрăх, сесси «малашлăха шанман, сехĕрленсе ÿкнĕ, тĕлли-паллисĕр лару-тăрура» иртнĕ. Америка хаçачĕсем çинче çырса тăракан пĕр тăван Олсопсем тата та ытларах тĕксĕм сăрсемпе çыраççĕ. Вĕсем «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатра: «Хĕвеланăç сурчĕн стенисем çинче чылай пысăк çурăк вырăнсем курăнма пуçларĕç, çак çурăксене сесси участникĕсем аран-аран кăна сапласа лартма пултарнă», тесе çыраççĕ.

Çурçĕр-Атлантика Союзĕн хальхи сессийĕ çинчен реакциллĕ журналистсем çакнашкал сахал мар çырнă.

Çакна мĕнпе ăнлантарса пама пулать-ха?

Ĕç акă мĕнре. Сессире çарпа политика тата экономика ыйтăвĕсене сÿтсе явма пуçласанах, США-па унăн тусĕсем хушшинчи мĕнпур хирĕçÿсем çиеле тухнă. США тусĕсем хăйсен хуçине пăхăнса тăрассинчен хăтăлма хăтланнă. Юлашкинчен вара, Францире эрнере пĕрре тухса тăракан «Трибюн де Насьон» хаçат сăмахĕсемпе каласан, Америка представителĕн—Даллесăн «Атлантика дисциплинине чăпăркка па вăйлатмалла пулнă».

Сесси кун йĕркинче пуринчен ытларах çар ыйтăвĕсем тăнă. Сесси хупăннă хыççăн пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре: 1953 çул валли татăклă çар программи, 1954 çул валли—малтанлăха йышăннă çар программи туса хатĕрленĕ, тесе каланă. Çак программăсем тăрăх, Çурçĕр-Атлантика блокне кĕрекен çĕршывсен «Хĕçпăшаллă вăйĕсене сисĕнмеллех ÿстерме» палăртаççĕ. Хĕвеланăç Европăра тĕрлĕ çар сооруженийĕсем тума 770 миллион доллар укçа уйăрса пама йышăннă. Сесси йышăннă решенисенчен пĕринче «çар производстви тĕлĕшпе нумай вăхăта пыракан программăна» пурнăçлама палăртнă. Çавăн пекех тата Атлантика блокне кĕрекен хĕçпăшаллă вăйсем валли Европăра 550 миллион доллар чухлĕ самолетсем туса кăларма килĕшÿ тунă.

Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, çак ĕçсене туса ирттерме США сĕнÿ панă. Хĕçпăшалланассине вăйлатнипе США хăйĕн умĕнче экономика енĕпе тăракан йывăрлăхсене татса пама шутлать.

Парижра тухса тăракан «Либерасьон» хаçат çырнă тăрăх, США вăрçа хатĕрленессине нумай вăхăта «тăсма» шутлать. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен, «Америка экономисчĕсем çар производстви чарăнса ларас мĕн пулсан США-ра кризис пуçланасран хăраççĕ». Анчах Хĕвеланăç Европăри капитализмла çĕршывсем çак сĕнÿсене килĕштерсех йышăнман.

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат çырнă тăрăх, Хĕвеланăç Европăри чылай çĕршывсем, укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен йывăрлăхсем тÿссе ирттернĕ пирки, малалла та вăйлăн хĕçпăшалланса пыма пултараймаççĕ. Çакăн çинчен сессире, çамахсем, Франци оборона министрĕ Плевен каланă. Çаксене пула сессире ĕçсем тата та ытларах йывăрланса ситнĕ, блока ертсе пыракансен Çурçĕр-Атлантика союзĕнчи кризиса пĕтерес тĕлĕшпе сахал мар тăрăшмалла пулнă.

Çурçĕр-Атлантика блокĕн сессийĕн ĕçĕнче «Европа çарне» тăвас пирки Парижра çырса хатĕрленĕ договора çирĕплетесси çинчен тăракан ыйту пысăк вырăн йышăннă. Çак договора васкавлăн ратификацилеме (çирĕплетме) кирли çинчен ятарласа резолюци йышăннă. Çак резолюцие те, «Пари-пресс-энтрансижан» хаçат çырнă тăрăх, Даллес çине тăрса хĕтĕртнипе йышăннă. Даллес Германи гитлерла çарне тепĕр хут уралантарма тăрăшать. Анчах Германи çарне тепĕр хут вăй илме парасси Францие питех те хăратать, мĕншĕн тесен вăл Германи çарĕсем тапăннинчен пĕр хут кăна мар ĕнтĕ инкек курнă.

Францире тухса тăракан «Монд» хаçат сесси пынă вăхăтра пулса тăнă ĕçсем çинчен çапла каласа çырнă: «Вашингтон пире ытларах та ытларах хĕсет, вăл Европа çарĕ çинчен тунă договора хăвăртрах çирĕплеттересшĕн... Парламентра тата çĕршывра халăх хирĕç тăрасси вăйланса пынă пирки Франци правительстви Вашингтона шантарса сăмах пама пултараймасть». «Европеецсем, тесе çырать малалла хаçат, Европа çарне тăвас пирки нимĕн чухлĕ те хавхаланмаççĕ». Сессире çак ыйту пирки Даллес хытă хĕснипе кăна калаçса татăлнă. Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, США государство секретарĕ: Америка Хĕвеланăç Европăри çĕршывсене малалла укçа-тенкĕ парса пулăшасси Парижра тата Бонра çырса хатĕрленĕ çар договорĕсене июнĕн 30-мĕшĕччен çирĕплетнинчен килет, тесе хăратнă.

Тата сессире çакă та паллă пулса тăнă. Атлантика блокне кĕрекен чылай çĕршывсем хăйсене çĕнĕ вăрçă авантюрине хутшăнтарма пăхнине хирĕç тăраççĕ. Копенгагенра тухса тăракан «Политикен» хаçат çырнă тăрăх, сессин пĕр ларăвĕнче Франци ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бидо, Даллес ырланипе, Атлантика блокне кĕрекен çĕршывсене Индо-Китайра вăрçă вăрçас ĕçре Францие пулăшма чĕнсе каланă.

Çакна хирĕç Норвеги ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Ланге çапла каланă: «Хăшпĕр çĕршывсенчи халăх шухăш-кăмăлĕ Çурçĕр-Атлантика пакт районĕн тулашĕнче тăракан çĕршывсем тĕлĕшпе обязательствăсене пысăклатма е ытларах шантарса калама май памасть...»

Фактсем ĕнтĕ чăннипех те çакăн çинчен калаççĕ. Хĕвеланăç Европăри халăх массисем агресси политикипе хĕçпăшалланмалли политикăна йышăнма килĕшмеççĕ. Вĕсем мире сыхласа хăварассишĕн кĕрешеççĕ.

ФРАНЦИРИ РЕАКЦИ ПЫСĂК ПОРАЖЕНИ ТÿСНĔ

Хальхи Францире влаçра тăракан ушкăнсен шалти тата тулашри политикине çĕршыври халăх массисен пысăкрах пайĕ килĕшмест. Апрелĕн 26-мĕшĕнче тата майăн 3-мĕшĕнче пулса иртнĕ муниципалитетсен суйлавĕн итогĕсем çакăн пек вывод патне илсе пыраççĕ. Çĕршыври Коммунистсен партийĕ ертсе пыракан демократиллĕ вăйсем пысăк çĕнтерÿ тунă.

Коммунистсен партийĕн суйлав умĕнхи кĕрешĕве питех те йывăр условисенче ирттермелле пулнă пулсан та, вăл çĕршыври нихăш партирен те ытларах сасă илнĕ, халиччен пекех Францире малта тăракан парти вырăнне йышăннă.

Реакци вăйĕсем—сылтăм социалистсенчен пуçласа деголлевецсем таран—халăхăн демократиллĕ вăйĕсен кандидачĕсене, чи малтан, коммунистсене поражени кÿрес, тесе пĕтĕм вăя хурса кĕрешнĕ.

Франципе муниципалитетсене суйламалли йĕрке—демократие хирĕç пыракан йĕрке. Пропорци йĕркипе суйламалли йĕрке 9 пин çын ытларах пурăнакан пысăк коммунăсенче (общинăсенче) кăна сыхланса юлнă. Çак йĕркепе суйланă чухне вăл е ку партин кандидачĕсем, хăйсем миçе процент сасă илнине кура, муниципалитетсенчи вырăнсене йышанассĕ. Ытти коммунăсенче, 9 пин çынтан сахалтарах пурăнакан коммунăсенче (кун пек коммунăсем Францире уйрăмах нумай) мажоритарлă текен йĕркепе усă кураççĕ. Мажоритарлă текен йĕркепе суйланă чухне ытларахăш сасă илнĕ кандидат е кандидатсен списокĕ кăна суйланнă тесе шутланать. Ку суйлава икĕ тапхăр ирттереççĕ. Малтанхи суйлавра пĕр кандидат та е кандидатсен списокĕ те ытларахăш сасă илеймен пулсан (мĕнпур сасăсенчен 50 процент ытларах пĕр сасă та илеймен пулсан), иккĕмĕш суйлавра вара ытти кандидатсенчен ытларах сасă илни те çителĕклĕ пулать. Çак йĕрке партисемпе ушкăнсене пĕр-пĕринпе пĕрлешме май парать. Çак маневрпа реакци анлăн усă курать. Ку ĕçре реакцие сылтăм социалистсен лидерĕсем пысăк пулăшу параççĕ. Вĕсем хăйсен партийĕн вырăнти организацийĕсене коммунистсемпе пĕрле пĕр список тăратма чараççĕ.

Коммунистсен партийĕн çак суйлавра тепĕр йышши йывăрлăх та тÿсмелле пулнă. Суйлав пуличчен икĕ уйăх маларах реакци Наци пухăвне çакăн пек решени йышăнтарнă: 9 пин çынтан каярах пурăнакан коммунăсенче суйлав ирттерес тĕлĕшпе тухакан расходсене муниципалитетсем мар, кандидатсен хăйсен тÿсмелле. Анчах реакци çавнашкал хăтланни те кăлăхах пулнă. Коммунистсен партийĕ суйлав ирттерме ятарласа фонд тума чĕнсе каланă. Çак чĕнĕве йышăнса, ĕçсыннисем суйлав ирттерме 15 миллион франк укçа пухнă.

Суйлав умĕнхи кунсенче полици нихçанхинчен те ытларах иртĕхме тытăннă. Коммунистсене суйлав умĕнхи пухусем ирттерме, хăйсен кандидачĕсемшĕн агитацилеме, литература сарма пур майсемпе те чăрмантарнă.

Сылтăм лагерь, буржуалла хаçатсем пулăшнипе, çĕршывра влаçра тăракан ушкăнсен тулашри тата шалти политикине мухтама, васкаса хĕçпăшал хатĕрлес политика тытса пынине тÿрре кăларма, çĕршыв интересĕсене ют çĕршыв капиталне пăхăнтарас, ĕççыннисене çаратас политика тытса пынине ырлама тытăннă. Реакци хăйĕн мĕнпур вăйĕсене компартипе унăн кандидачĕсене хирĕç тăратнă. Реакци «коммунистсен партине çул çинчен шăлса ывăтма», «коммунистсене муниципалитетсенчен хăваласа кăларма» хушнă. Франци реакцийĕ халăха сĕннĕ программа çавăн пек пулнă ĕнтĕ. Коммунистсен партийĕ ертсе пыракан демократиллĕ лагере илес пулсан, вăл суйлава миршĕн, çĕршывăн наци никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешмелли лозунгпа хутшăннă.

Халăх хăйĕн партийĕн сассине илтнĕ. Апрелĕн 26-мĕшĕнче пулнă суйлавра Коммунистсен партийĕ пуринчен те ытларах саса илнĕ. 455 коммунăра (Париж хулисĕр пуçне) муниципалитетсенчи 12.852 вырăнтан 3.703 вырăна рабочисемпе демократсен союзĕн кандидачĕсем йышăннă. Парижри муниципалитет советĕнчи 90 вырăнтан 28 вырăна компарти кандидачĕсем йышăннă. Коммунистсен партийĕ çавăн пекех Марсель хулинче, Сенăпа Уаза департаментĕнче малти вырăна тухнă. Вăл чылай самоуправленисенче малтанхинчен ытларах вырăн йышăннă.

Иккĕмĕш тапхăрти суйлав та сылтăм партисене савăнтарма пултараймая. Вĕсем иккĕмĕш суйлавра хăйсем мала тухасса шанса тăнă. Коммунистсен партийĕ хăйĕн халиччен хи вырăнĕсене сыхласа хăварнă кăна мар тата çĕнĕрен чылай пысăк çитĕнÿсем тунă. Коммунистсен партийĕн çак çитĕнĕвĕ вăл—демократилле лагерĕн пысăк çĕнтерĕвĕ тата реакцин пысăк çухатăвĕ пулса тăрать. Америкăра тухса тăракан буржуалла «Нью-Йорк таймс» хаçат суйлав результачĕсем пирки ÿпкелешсе çырасси ăнсăртран пулман ĕнтĕ. «Францие пилĕк çул хушши экономика енĕпе Америка пулăшса тăни те, союзниксен Европăри информациллĕ (кăна ĕнтĕ пропагандистла тесе вуламалла.—**А. А.**) органĕсем ку таранччен тунă ĕçсем те коммунистсене пулăшса тăракан пилĕк миллион çынна яхăн шутланакан пĕтĕçнĕ массăна хистеме пултарайман»,—тесе çырнă вăл хаçат.

А. АЛЕКСАНДРОВ.

Берлинра пулнă савăнăçлă лару

БЕРЛИН, майăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Берлинра Совет Çарĕ Германие гитлерла пусмăртан ирĕке кăларнăранпа 8 çул тултарнă ятпа савăнăçлă лару пулса иртнĕ.

Ларура Демократилле Германи Республикин премьер-министрĕ Отто Гротеволь, премьер-министр заместителĕ тата Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн генеральнăй секретарĕ Вальтер Ульбрихт, Демократилле Германи Республикин Халăх палатин председателĕ Иоганнес Дикман, премьер-министр заместителĕсем, правительство членĕсем, Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн Политбюро членĕсем пулнă.

Ларура çавăн пекех Совет Союзĕн Демократилле Германи Республикин правительстви çумĕнчи дипломатилле миссийĕн пуçлăхĕ И. И. Ильичев, Совет Союзĕн Германири Контроль Комиссийĕн председателĕн пĕрремĕш заместителĕ И. Ф. Семичастнов, Контроль Комисси председателĕ çумĕнчи политикăлла советник П. Ф. Юдин, Демократилле Германи Республикине хăнана килнĕ совет металлургĕсен делегацийĕн руководителĕ П. Д. Ефанов тата ыттисем те пулнă.

Совет Çарĕ Германие ирĕке кăларнăранпа 8 çул тултарни çинчен Демократилле Германи Республикин сывлăх министрĕ Луитпольд Штейдле доклад туса панă.

Штейдле çапла каланă: паттăр Совет Çарĕ гитлерла фашизма çĕмĕрсе тăкнин историлле пĕлтерĕшне нимĕç халăхĕ ытларах та ытларах ăнланма пуçлать. Совет Çарĕ гитлерла фашизма çĕнтернипе нимĕç халăхĕ хăйĕн историйĕнче малтанхи хут мирпе демократи çулĕпе пыма, ытти халăхсемпе тăванла туслă пурăнма май илчĕ.

Нимĕç халăхĕ кунран-кун çакна лайăхрах курса тăма пуçларĕ,—тенĕ Штейдле,—нимĕç халăхĕн пурнăç ыйтăвне таттса памалли пĕртен-пĕр çул вăл—нимĕç халăхĕ хушшинче мирлĕ калаçу тумалли çул, çĕршыври мĕнпур патриотла вăйсене пĕтĕçтермелли çул пулса тăрать.

Штейдле çавăн пекех тата Совет Союзĕ нимĕç халăхне Германи ыйтăвне мирлĕ майпа татса парассишĕн, пĕрлĕхлĕ, демократилле, никама пăхăнман, мирлĕ Германи тăвасссишĕн пыракан кĕрешÿре пысăк пулăшу панине палăртнă. Вăл совет халăхĕпе туслă пурăнассине тĕреклетессишĕн пĕтĕм нимĕç патриочĕсем тăрăшни çинчен каланă.

Демократилле Германи Республики социализм строительствинче тунă çитĕнÿсем çинчен каласа, Штейдле çакна палăртнă: Демократилле Германи Республики нимĕç халăхĕ пĕрлĕхлĕ, никама пăхăнман, мире юрататакан, демократилле Германишĕн кĕрешес ĕçре хăватлă вăй пулса тăрать.

Доклад хыççăн Демократилле Германи Республикин президенчĕн канцеляри руководителĕ—статс-секретарь М. Опиц Демократилле Германи Республикин президенчĕ Вильгельм Пик йышăннă решение вуласа панă. Çак решени тăрăх, Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн председательне тата Демократилле Германи Республикин премьер-министрне Отто Гротеволе, çавăн пекех Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн генеральнăй секретарьне тата Демократилле Германи Республикин премьер-министрĕн заместительне Вальтер Ульбрихта Карл Маркс орденĕпе наградăламалла тунă. Çак ордена Демократилле Германи Республикин правительстви Карл Маркс çуралнăранпа 135 çул тултарнă ятпа тунă. Демократилле Германи Республикин правительстви сĕннипе Карл Маркс ячĕпе памалла тунă пĕрремĕш орденпа Демократилле Германи Республикин президентне Вильгельм Пика наградăланă.

Гротевольпе Ульбрихта Карл Маркс орденĕ панă чухне ларура пулнисем пурте тăвăллăн алă çупнă.

ЧЕЧЕК КĂШĂЛĔСЕМ ХУНА

БЕРЛИН, майăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Çарĕ нимĕç халăхне гитлерла фашизм пусмăрĕнчен ирĕке кăларнăранпа 8 çул тултарнă ятпа Берлинри Трептов паркĕнче Берлиншăн çапăçса вилнĕ совет воинĕсен памятникĕ умне чечек кăшăлĕсем хунă.

Чечек кăшăлĕсене Демократилле Германи Республикин президенчĕ ячĕпе, Демократилле Германи Республикин правительстви ячĕпе, Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕ ячĕпе, халăх палати, çĕрсен палати, Наци фрончĕн Наци совечĕн президиумĕ ячĕпе, министерствăсен ячĕпе, демократилле партисемпе массăллă организацисен ячĕпе хунă.

Памятник умне çавăн пекех тата Совет Союзĕн дипломатилле миссийĕ тата халăх демократи çĕршывĕсен дипломатилле миссийĕсен ячĕпе чечек кăшăлĕсем хунă.

Памятник çумĕнче пулнă митингра Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн Политбюро членĕн кандидачĕ Э Хонекер тата Демократилле Германи Республикин премьер-министрĕн заместителĕ Генрих Рау тухса каланă.

Вĕсем гитлерла фашизма хирĕç паттăррăн çапăçса вилнĕ совет воинĕсен таса ятне хисеп тунă, хăйсене ирĕке кăларнăшăн Совет Çарĕпе совет халăхне тав тунă, нимĕç халăхĕпе совет халăхĕ хушшинчи туслăха малалла çирĕплетме кирлине палăртнă. Çак туслăх мире юрататакан пĕрлĕхлĕ, демократилле Германи туса хумалли çирĕп никĕс пулса тăрать.

Потребительсен кооперацийĕн пурлăхне упрамалла

Юлашки вăхăтра республикăри государство тата коопераци пурлăхне сыхлас ĕç чылай лайăхланчĕ. Нумай предприятисенче, МТС-сенче, колхозсенче социализмла харпăрлăха тимлĕн упраççĕ. Суту-илÿ организацийĕсенче те нумайăшĕнче пурлăха сыхлас ĕç чылай лайăхланнă. Анчах çапах та хăшпĕр райпотребсоюзсем, райпосем тата ялпосем пайщиксен пурлăхне сÿрĕк упраççĕ, вĕсен интересĕсене тимлĕн хÿтĕлемеççĕ. Çавна пула 1952 çулта республикăри потребительсен кооперацийĕнче çĕршер пин тенкĕлĕх халăх пурлăхне вăрласа тата салатса пĕтернĕ.

Потребительсен кооперацийĕн тĕп задачи — ĕççыннисен куллĕнхи ыйтăвĕсене лайăхрах тивĕçтересси, хулапа ял хушшинчи, промышленноçпа социализмла ял хушшинчи экономикăлла сыхăнăва ытларах çирĕплетесси, колхозсене хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетме пулăшасси. Çакна потребительсен кооперацийĕнче ĕçлекен нумай работниксем лайăх ăнланаççĕ тата хăйсен тивĕçне тÿрĕ кăмăлпа пурнăçласа пыраççĕ. Çав вăхăтрах райпотребсоюзсемпе ялпосене ертсе пыракан работниксем хушшинче шанчăксăр, хăйсемшĕн çеç тăрăшакан çынсем кĕрсе кайнă тĕслĕхсем те пур-ха.

Куславккари райпотребсоюзра промышленность таварĕсен складĕнче Никитин хушаматлă çын заведующи пулса ĕçленĕ. Вăл кĕске вăхăт хушшинче 26 пин тенкĕ укçа илнĕ те тухса тарнă. Кам вăл Никитин? Вăл унччен те растрата тунă пулнă, çавăнпа ăна тепĕр хуçалăх организацийĕнчен ĕçрен кăларса янă. Никитин ĕçке ернĕ çын пулнă. Райпотребсоюзра ĕçлекенсем çавна пĕлнĕ. Райпотребсоюз председателĕ пулнă Абаев юлташа Никитин çинчен асăрхаттарнă. Анчах Абаев юлташ работниксем асăрхаттарнине хăлхана та чикмен.

— Никитин — шăрĕн ялсем, вăл ĕçнине пĕлетĕп, ăна тÿрлетме пулать, — ответленĕ председатель.

Куславккаранах тепĕр тĕслĕх илĕпĕр. Кунти ялпора продавец пулса ĕçленĕ Мишин тăтăшах халăх пурлăхне вăрланă. 1952 çулта Мишин ĕçне пилĕк хут ревизи тунă, кашни хутĕнчех вăл вăрланине палăртнă. Ревизи акчĕсене пурне те ялпо правленийĕн ларăвĕсенче сÿтсе явнă. Ялпо председателĕ Каняшин сĕннипе Мишинăн киревсĕр ĕçĕсем çинчен судпа следстви органĕсене паман. Правлени çавăн пек ачашланине кура, Мишин тата хăюллăрах ашкăнма тытăннă, ялпона пысăк сиен кÿнĕ. 1952 çулта Карачăри ялпора продавец пулса ĕçленĕ Корнилов та 40 пин тенкĕ ытла растрата тунă. Магазин заведующийĕ пулнă Какуркин та тÿрĕ мар çын пулнă.

Асăннă тĕслĕхсем Куславкка райпотребсоюзĕн правленийĕн тимсĕрлĕхне, вăл пайщиксен накасно пурнăçлама тăрăшманнине, кадрсем суйласа илес ĕç çине çиелтен пăхнине кăтартаççĕ. Кунпа пĕрлех хăшпĕр ертсе пыракан работниксем жуликсемпе вăрăсене тăрă шыв çине кăларас вырăнне халăха хирĕçле ĕçсем тăвакансене хÿтĕлесе тăнине палăртас пулать. Абаев юлташăн тимсĕрлĕхне, вăл ĕç çине чунсăр пăхнине пула райпотребсоюз пысăк сиен курнă, анчах çавăншăн ăна тивĕçлĕ ответ тыттарман.

Асăннă тĕслĕхсем акă мĕн çинчен калаççĕ. Чăвашпотребсоюз правленийĕ (председателĕ А. Балашов юлташ) райпотребсоюзсен ĕçĕпе тĕплĕн интересленмест, вĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме татăклă мерăсем йышăнмасть. Куславкка райпотребсоюзĕнче растратăсемпе çаратусем нумай пулни çинчен Чăвашпотребсоюз правленийĕ пĕлмен мар. Центросоюз кăтартса панă тăрăх, райпотребсоюзсенче е ялпосенче 5 пин тенкĕрен ытларах растрата тусан, республикăсемпе облаçсенчи потребсоюз правленийĕсен тĕрĕслеме вырăна ятарласа хăйсен работникĕсене ямалла. Чăвашпотребсоюзра çак йĕркесене пăсаççĕ. Унăн правленийĕ контрольпе ревизи пайĕн ĕçне лайăхлатма, тĕрĕсленĕ чухне палăртнă çитменлĕхсене пĕтерме татăклă мерăсем йышăнмасть. Хăшпĕр чухне Чăвашпотребсоюз работникĕсем тÿрĕ мар çынсене хÿтĕлес çул çине тăраççĕ. Маларах асăннă Мишина тата ăна пытарса пурăннă Каняшина ответ тыттарма судпа следстви органĕсем ĕç пуçарсан, Чăвашпотребсоюз правленийĕн хăшпĕр членĕсем Каняшина мухтама, ĕçе лайăх пĕлекен, питĕ хаклă работник тесе шантарма пăхнă.

КПСС Куславкка райкомĕн секретарĕ Колпакова юлташ та Мишинпа Каняшина хÿтĕленĕ. КПСС райкомĕ Мишинпа Каняшин айăплине, вĕсем тÿрĕ мар ĕçленине пĕлнĕ пулин те, вĕсене суд пуличчен парти енĕпе ответ тыттарман. Совет сучĕ Мишинпа Каняшина тивĕçлĕ наказани пачĕ.

Кунта асăннă пек çитменлĕхсем ытти хăшпĕр райпотребсоюзсемпе ялпосенче те пур. Çав тĕслĕхсем потребительсен кооперацийĕнче халăх пурлăхне япăх упранине, хăшпĕр ертсе пыракан работниксем партипе правительство кăтартăвĕсенчен тивĕçлĕ вывод туманнине кăтартаççĕ. Чăвашпотребсоюз правленийĕн кадрсем суйласа илес, вĕсене тĕрĕс воспитани парас, райпотребсоюзсене ертсе пырас ĕçе вăйлатни питех те кирлĕ.

Е. ПАТЕЕВ.

Районта Пичет кунне паллă туни

ВĂРНАР. Пичет кунне ирттерес тĕлĕшпе мĕн тумаллине КПСС райкомĕ малтанах палăртса хучĕ. Палăртнă ĕçсене пурнăçлама парти райкомĕн работникĕсем тата штатра тăман инструкторĕсем, çавăн пекех пичет работникĕсем пурĕ 20 çын ытла колхозсене тухса кайрĕç. Вĕсем майăн 4—7-мĕшĕсенче «Пичет кунĕ» темăпа агитаторсен семинарĕсене ирттерчĕç. Кун хыççăн агитаторсем хирте ĕçлекенсемпе калаçусем ирттернĕ. Кашни колхозрах корреспондентсен активĕн тата вулакансен пухăвĕсене ирттерсе, Пичет кунĕ çинчен доклад туса панă тата колхозсенчи стена хаçачĕсен отчечĕсене сÿтсе явнă.

Заводри рабочисемпе служащисен тата зооветтехникумра вĕренекенсемпе преподавательсен пухăвĕсенче районти «Социализм çулĕпе» хаçат ĕçĕ çинчен отчетсем пулчĕç. Çак пухусенче корреспондентсемпе вулакансем районти хаçат ĕçне, колхозсемпе предприятисенче, шкулсемпе учрежденисенче стена хаçачĕсем кăларас ĕçе лайăхлатма паха сĕнÿсем пачĕç.

Районта пичет ĕçĕ лайăхлансах пырать. Районти хаçатсăр пуçне Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхозра «Сталинец» хаçат 500 экземпляр тухса тăрать, ытти колхозсенче 19 стена хаçачĕпе 109 боевой листок, предприятисемпе учрежденисенче тата шкулсенче—91 стена хаçачĕ тухаççĕ. Хрущев ячĕпе, Каганович ячĕпе тăракан колхозсенче халĕ стена хаçачĕсене кашни кун кăларса тăраççĕ. Ку стена хаçачĕсем çумĕнче çавăн пекех «Мухтав», «Çиçĕм», «Крокодил» листоксем кăлараççĕ. Пичет кунĕ ячĕпе ирттернĕ пухусенче стена хаçачĕсене тăтăшах кăларса тăма паха сĕнÿсем панă, кашни колхозрах стена хаçачĕсене эрнере пĕр номертен кая мар кăларса тăма палăртнă.

Нумаях пулмасть парти райкомĕн VIII-мĕш пленумĕ районти хаçат ĕçĕсем çинчен сÿтсе яврĕ. Пленум решенийĕсене пурнăçлас, районти хаçат ĕçне тата стена хаçачĕсем кăларса тăрассине лайăхлатас тĕллевпе çак кунсенче корреспондентсемпе стена хаçат редакторĕсен тата вулакансен активĕн районти пухăвĕ пулса иртет. Пуху тĕлне районти чи лайăх стена хаçачĕсен выставкине организацилетпĕр.

Е. ВОЛКОВ,
«Социализм çулĕпе» хаçат редакторĕ.

Шкул ачисен çуллахи канăвĕ

Шкул ачисен çуллахи каникул кунĕсем çывхараççĕ. Экзаменсем тытсан, ачасем пионер лагерĕсене, тĕрлĕрен вырăнсене похода тухса каяççĕ. Кăçал çуллахи каникул вăхăтĕнче Шупашкарти икĕ пин шкул ачи пионер лагерĕсенче пулмалла.

Çĕрпÿ хули çывăхĕнче, Кĕçĕн Çавал хĕрринче, Облпрофсовет пионер лагерĕ уçать. Кунта виçĕ сменăра пин ытла ача канмалла. Электроаппаратура заводĕнчи профсоюз комитечĕн Шупашкартан 12 километрта Карачура ялĕ çывăхĕнче пионер лагерĕ пулать. Çуллахи каникул вăхăтĕнче кунта заводри рабочисемпе служащисен ачисем 400 çын ытла канмалла. Пуçламăш тата вăтам шкул работникĕсен профсоюзĕн обкомĕ йĕркеленипе Шупашкар районĕнчи Тĕкĕрç ялĕ çывăхĕнче пионер лагерĕ пулать.

Хальхи вăхăтра пионер лагерĕсенче чылай ĕçсем туса ирттереççĕ. Пурăнмалли çуртсене юсаççĕ, лагерь вырнаçнă вырăнсене илемлетеççĕ. Профсоюз организацийĕсенчен чылайăшĕ пионер лагерĕсем валли хуçалăхра кирлĕ япаласем, физкультура инвентарĕ туянаççĕ. Пионер лагерĕсем çумĕнчи библиотекăсенче вырăс классикĕсемпе совет писателĕсен произведенийĕсем, ача-пăча кĕнекисем нумай пулаççĕ.

А. АЛЕКСЕЕВ.

Вулакансен йышĕ ÿсет

ЕТĔРНЕ. Ирçе ялĕнчи библиотекăран кĕнекесем илсе вулакансен йышĕ çултан-çул нумайланса пырать. Хальхи вăхăтра библиотекăран 612 çын кĕнеке илсе вулать. Библиотекăри кĕнекесен шучĕ те хушăнса пырать. Халĕ библиотекăра политика, ялхуçалăх, наука, илемлĕ литература кĕнекисем 3.800 ытла шутланаççĕ.

Иртнĕ çулта библиотека Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнчи колхозниксемпе колхозницăсене 10 пин кĕнеке ытла вулама панă. Колхозниксем С. Кириллов, Ф. Лукин, уй-хир бригадин бригадирĕ В. Шестеркина, сурăх ферминче ĕçлекен М. Димитриева кашни 20—30 кĕнеке илсе вуланă.

Г. МЫТИКОВ.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРЕН ГЛАВНАЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, майăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче фронтсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

Майăн 7-мĕшĕнче çĕрле Америка авиацийĕ Тончхонь хули çине çĕнĕрен тапăннă, мирлĕ халăх пурăнакан кварталсем çине 500 ытла бомба пăрахнă. Мирлĕ халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем нумай, çуртсемпе землянкăсене нумай ишĕлтерсе пĕтернĕ.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 4 самолетне персе ÿкернĕ.

Англипе Египет хушшинчи калаçусем чарăнса ларнă

ПАРИЖ, майăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). «Аль-Ахбар» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Англипе Египет хушшинче Англи çарĕсене Суэц канал патĕнчен илсе тухмалла тăвас пирки пыракан калаçусене хутшăннă майор Салах Салем майăн 7-мĕшĕнче Каирта офицерсен клубĕнче тухса каланă чухне çапла каланă: акăлчансем Египет халăхĕ ыйтнипе килĕшмеççĕ пулсан, Египет делегацийĕ конференцире акăлчансемпе пĕр сĕтел хушшине ларма килĕшес çук, тенĕ.

КАИР, майăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Англин Египетри посолĕ Стивенсон ĕнер Египет премьер-министрне Нагиба Англи çарĕсене Суэц каналĕ патĕнчен илсе тухмалла тăвасси çинчен пыракан калаçусем пирки хăйĕн правительствин посланине пырса панă. Посланире мĕн калани çинчен хаçатсем нимĕн те пĕлтермеççĕ.

Египет делегацийĕ çак послание çийĕнчех пăхса тухнă. Хаçатсем: Египет хăйĕн позицине улăштармасть, Англи çарĕсене пĕтĕмпех илсе каймалла тăвассишĕн тăрать. Египет хăйĕн прависем пирки хаклапма нихçан та килĕшес çук, тесе çыраççĕ,

Çавăнпа пĕрлех хаçатсем Англипе Египет хушшинчи калаçусем чарăнса ларнă май, Америка посолĕ Кеффери активлăн ĕçлеме пуçланине палăртаççĕ. Бейрутри радио пĕлтернĕ тăрăх, майăн 7-мĕшĕнче Кеффери Египет ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Махмуд Фавзи патĕнче пулнă. Вăл Англи çарĕсене Суэц каналĕ патĕнчен илсе тухмалла тăвасси çинчен пыракан калаçусенче США пулăшма хатĕр тăни çинчен пĕлтернĕ.

Демократилле ушкăнсем çак сĕнĕве США калаçусене хутшăнма пăхни пулать, тесе шутлаççĕ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ—майăн 10-мĕшĕнче (кăнтăрла та, каçхине те) тата майăн 12-мĕшĕнче «Вей, ветерок». Кăнтăрлахи спектакль 12 сехетре, каçхине—20 сехет те 30 минутра пуçланать.

КИНО

«РОДИНА»—майăн 10-мĕшĕнче 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланакан сеанссенче «Весна в Москве»; майăн 11-мĕшĕнче пур сеанссенче те «Завтра будут танцевать всюду».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01122 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.